# Владимир Путин патне çитернĕ ыйтусенче Чăваш Ене те “паллама” пулать
● 3 стр.

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр… Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

Чăваш хĕрарăмĕ

14(936) №, 2016, ака/апрель, 16

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.

*ÇĂЛТĂР ÇŸПÇИ*

## Хальхи çамрăксем ăмсанмалăх пур



**Наталья СЕРГЕЕВА, ЧР тава тивĕçлĕ артистки**

Чăн-чăн искусство, шел те, пурнăç айккинче юлнăн туйăнать. Çӳллĕ шайри ĕçсене хаклама пĕлменни чуна ыраттарать. Вĕсене театр сцени çине кăларнипе çырлахмалла мар, радиопа итлеттермелле, телевизорпа кăтартмалла. Çынсем чăнахах та лайăххине уйăрса илме пултарччăр. Çакă чуна пуянлатма, тавракурăма анлăлатма, автор ятне вилĕмсĕрлетме пулăшать. Унсăрăн йӳннине, ниме тăманнине те пахалăхлисен шутне кĕртекенни тупăнĕ.

Нумай сериллĕ мелодрама курма хăнăхрăмăр. Наркотик пекех вăл пирĕншĕн. Çĕнĕ сери пуçланасса, ĕçпуç мĕнпе вĕçленессе чăтăмсăррăн кĕтетпĕр. Артисчĕсем ĕнентерӳллĕ выляççĕ, анчах чуна валли нимех те çук унта. Çав вăхăтра килте 100 тĕрлĕ ĕç тума пулать. Кайран сенкер экран умĕнче тĕлли-паллисĕр ларнишĕн ӳкĕнетпĕр, анчах вăхăта каялла тавăрма çук.

Çынлăх йĕркине пăхăнса пурăнма тăрăшмалла: ваттине хисеплемелле, халсăррине пулăшмалла. Тĕнчере ырри усаллинчен ытларах пултăр. Анне кăмакара кукăль пĕçеретчĕ те ялти ватăсене хăналатчĕ. Эпĕ унăн ырă кăмăлне курса çитĕннĕ. Çавăнпах çынна пулăшас килни, ытларах ĕçлеме ăнтăлни – чунра, чĕрере.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче сăра кĕленчиллĕ çамрăксене сивлеттĕмĕр. Унтанпа пурнăç лайăх енне улшăнчĕ. Хальхи ăру спортпа туслă, сывă пурнăç йĕркине пăхăнать. Спортзала çӳрекен нумай. Вĕсем пĕр-пĕринчен тĕслĕх илеççĕ. Шăпах çак çамрăксем хисепре. Апла тăк тĕрĕс çулпа пыратпăр эпир. Халĕ кĕлеткене пиçĕхтерме пĕтĕм услови пур. Кашни тăрăхра спорт керменĕсем çĕкленсе ларчĕç. Çӳре – ан ӳркен кăна.

Çамрăк чухне вăтанчăк, именчĕк пулнă. Паянхи хĕрсемпе каччăсем апла мар. Вĕсем мĕн кирлине, тĕллеве мĕнле пурнăçламаллине лайăх пĕлеççĕ. Хăйсене ирĕклĕ тытакансене ырламалла çеç. Ăмсанатăп та вĕсене. Халĕ информаци çăлкуçĕ нумай. Интернет урлă професси суйласа илме те, ĕç тупма та, конкурсра çĕнтерме те пулать. Урăхла каласан, мал ĕмĕтлисен, пурнăç хуçисен хăйсене кăтартма май пур. Хастартарах пулмалла, вăхăт таппипе тан пымалла!

**Çанталăк**

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 16.04 | +19 | + 7 |
| 17.04 | +10 | + 8 |
| 18.04 | +11 | + 5 |
| 19.04 | + 9 | + 5 |
| 20.04 | +14 | + 6 |
| 21.04 | +10 | + 5 |
| 22.04 | +11 | + 6 |

●Пĕртăвансем çемье çавăрмасăрах ĕмĕре ирттереççĕ 2 стр.

●Вăрнар районĕнчи Нурăс салине ейӳ икĕ енне пайланă 4 стр.

●Кĕлетке сусăр пулни спортра çитĕнӳ тума чăрмантармасть 5 стр.

●Шăмă сыппи ыратнине эмелсĕрех ирттерме пулать. Пахчана сиен кӳрекен хурткăпшанкăран хими им-çамĕсĕрех хăтăлма май пур 8 стр.

●Тунсăх тыткăнĕнче 9 стр.

●“Хĕрлĕ королевăн” чапĕ тата манăçăвĕ 11 стр.



Елена АТАМАНОВА сăнӳкерчĕкĕ.

# Пăла юхать сарăлса...

4 стр.

# Сĕве патне васкаса

**Патăрьел районĕнчи Каншелте пурăнакан Кирилловсене анкарти хыçĕнче çĕр ишĕлни темиçе çул ĕнтĕ канăç памасть.**

**– Вырăнти, районти ертӳçĕсене ку ыйтупа ывăнтарса та çитертĕмĕр пулĕ. Акă татах çуркунне çитрĕ, каллех çĕрулми лартмалла, пахча хĕррине вара çывхарма та хăрамалла. Трактор та, лаша та кĕреймест анкартине, çаврăнмалăх вырăнĕ те юлмарĕ. Иртнĕ çул сухаланă чухне тимĕр акапуç çырмана анса кайсан сехре хăпрĕ. Çакăн хыççăн пĕр тракторист та пахчана ура ярса пусас çук. Çу çитсен ачасем анкарти хыçĕпе пулла çӳреççĕ, çĕр тăрук ишĕлме пултарни пирки ялан асăрхаттаратăп шăпăрлансене, усалли ан пултăрах. Вăт, çакнашкал пурăнатпăр эпир Пăла хĕрринче. Çуркуннесерен шыв шăнкăртатса юхнă май юханшыв сарăлсах, пирĕн кил-çурт патнелле çывхарсах пырать, – чунне ыраттарсах калаçать кил хуçи арăмĕ.**

**“Чăваш хĕрарăмĕ” хаçата 2016 çулăн иккĕмĕш çурри валли çырăнтарнине аса илтеретпĕр. Хакĕ: 354,42 тенкĕ /“Чăваш пичечĕ” тата “Советская Чувашия” киоскĕсенче: 222 тенкĕ, редакцире /альтернатива/: 141 тенкĕ/. Çурхи ĕçсем пуçланиччен почтальонпа хальтерех тĕл пулма васкăр.**




# Мал ĕмĕтлĕ пĕртăвансем

**Икĕ юлташ ушкăна чăмăртаннă тăшманран та вăйлăрах тенĕ ваттисем. Юлташсем пĕртăвансем чухне вара вĕсем пушшех вăйлă. Килĕштерсе туслă пурăнни чăннипех те çав тери паха.**

**Элĕк районĕнчи Ураскилтре пурăнакан Верăпа Юлия Красновсем те пĕр çăвартан тенĕ пек пурăнаççĕ. Пĕртăвансем сакăр теçетке çул ытла ĕнтĕ пĕр çурта тирпей-илем кĕртсе хуçаланаççĕ. Тĕп килне пĕтме паман вĕсем. Çуралса ӳснĕ тăрăхрах юлнăскерсем ăна вăй çитнĕ таран çĕнетнĕ.**

– Халĕ ку çурт та хамăр пекех кивелчĕ ĕнтĕ, – шӳтлет уçă кăмăллă Юлия Николаевна.

Вăрçă ачисем иккĕшĕ те – ĕç ветеранĕсем.

– Малтан колхозрах ĕçлесе пурăнтăм-ха. Аттен йăмăкĕ: «Çынна мĕнле те пулин ремесла /çапла калатчĕ/ кирлех. Çĕвĕçе вĕренме кай», – хистерĕ. Элĕкре вĕренес тесен хамăрăн çĕвĕ машини кирлĕччĕ. Унта каясси пулмарĕ. Каярах Мускаври пичче Миша, ун чухне вăл инкепе пĕрлешменччĕ-ха, ăна пысăк черетре тăрсах туянса пачĕ. Çĕмĕрлерен сумкăпа йăтса илсе килчĕ пысăк тупрана. Вăхăт иртсен ялта КБО уçăлчĕ. Миша тĕрлĕ журнал парнелерĕ. Малтанах чертежсене хăй ӳкерчĕ. Эпĕ çĕленĕ костюмпах авланчĕ вăл. Чертеж тума пĕлмесен ĕçлеме май çук – çине тăрсах ӳкерме вĕрентĕм. Атте те манпа çĕрĕ-çĕрĕпех ларатчĕ. Ăна-кăна çĕлесе пама ыйтатчĕ. 30 çул ытла ялти КБОра тăрăшрăм, çавăнтанах пенсие те кайрăм, – каласа кăтартать Вера Николаевна.

Юлия Николаевна вара ĕмĕрĕпех шкулта тирпейлӳçĕре тăрăшнă.

– Кирпĕч пушатмалла-и, вăрмана каймалла-и, вутă хутмалла-и – çĕрле те килсе шаккатчĕç чӳречерен. Эпир шкултан инçе мар та. Аялти урамрисем вăл-ку ĕç çинчен сисмесĕрех юлатчĕç, – тет вăл.

Ачалăхĕ хаяр вăрçă çулĕсемпе пĕр килнĕскерсем, паллах, урамра выляса-чупса çӳрес вырăнне уйра тăрăшнă. Хирсене те çум курăкран тасатнă ун чухне. Аслисем утта тухсан кĕçĕннисем те вĕсем хыççăн кĕрепле йăтса утнă.

– Атте коммунист пулнă пирĕн. Çав тери тӳрĕ кăмăллăччĕ вăл. Çынсем шанатчĕç ăна. Улталаса та курман вăл. Пире те атте пирки нихăçан та никам та пĕр усал сăмах каламан. Вăрçă пуçлансан та фронта ялтан пĕрремĕш тухса кайрĕ. Ун чухне вăл колхоз председателĕнче ĕçлетчĕ. Çĕнтерӳпе Берлинах çитнĕ вăл. Киле 1945 çулта авăн уйăхĕнче таврăнчĕ те каллех колхоз председательне лартрĕç ăна.



Халĕ акнă хирсене çул хĕрринчен çеç пăхса çӳреççĕ. Ун чухне кашни лаптăка пăхса çаврăннă. Акăнман шăйрăк юлсан та ăна лашапа кайса сапланă. Çирĕп йĕркепе ĕçлесе пурăннă ун чухне, – каласа кăтартаççĕ Красновсем.

Чи çывăх тăванĕсемпе пĕрлех пурăннă Юльăпа Вера аппасем. Тĕп килтех тымар янăскерсем 1982 çулта – ашшĕне, 1994 çулта амăшне пытарнă. Кашни хăйне йăва çавăрма май килмен. Çемьеллĕ пулма шăпи пӳрмен-ши...

– Качча кайма çи-пуç та пулман пирĕн. Кил-çурт та япăхчĕ. Аттепе анне пуш-пушă алăпа уйрăлса тухнă. Ун хыççăнах вăрçă пуçланнă. «Хам ĕçлесе илнĕ укçа пĕтĕмпех хам алăра пулсан ялта манран пуянрах çын та пулмастчĕ», – тетчĕ атте. Шăллĕ çамрăклах Владивостока тухса кайнă. Ăна вĕрентнĕ вăл. Тетĕшĕсене те уйрăлса тухма пулăшнă, виçĕ йăмăкне те пăрахман, вĕсене те тăхăнтартнă. Нихăш тăванне те кӳрентермен вăл, пурне те пулăшма тăрăшнă. Асанне вăхăтсăр вилнĕ-çке. Атте асли пулнă май яваплăха хăй çине тиенĕ.

Кайран Мускавра пурăнакан тетене те вĕрентмеллеччĕ. Эпир 7 класс çеç пĕтернĕ. Малалла вĕренейменшĕн, пĕлӳ илменшĕн пачах та кулянмастăп. Пирĕн вăхăтра ĕç пулнă – ĕçленĕ эпир. Вырăсла пĕлменни те ура хунă, – пĕр харăссăн тенĕ пек пĕлтереççĕ аппăшĕпе йăмăкĕ.

Ĕне те икĕ хĕл каялла çеç усрама пăрахнă вĕсем. Витрисем те йывăр-çке. Çулла выльăха кĕтĕве кăларсан тăвата уралăскерсем хыççăн ĕлкĕрме те çук. Укол тутарма та çу каçа темиçе каймалла – тытса чарма кансĕр. Апла пулин те пач выльăхсăр мар вĕсем. Сурăхсем тытаççĕ. Çулла йăран тулли пахчаçимĕç, улмаçырла çитĕнтереççĕ.

– Тепĕр пĕртăвансем укçашăн çапăççах пĕтеççĕ. Эпир килĕштеретпĕр. Мĕн пайламалли пур? Малаллах пурăнас килет-ха. Мускаври тетен виçĕ ача, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем çитĕнеççĕ. Çавсене пулăшмалла. Çăва тухсан хăнана килетпĕр теççĕ-ха, – мал ĕмĕтпех пурăнаççĕ пĕртăван Красновсем.

**Татьяна НАУМОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

# Уява хатĕрленме те, хаçат çырăнма та ĕлкĕреççĕ



**Элĕк районĕнчи Чăваш Сурăмри вăтам шкул вĕрентекенĕсемпе тĕл пулни кăмăла çĕклерĕ. Уйрăммăн тав сăмахĕ калас килет вĕсене – пурте /!/ «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçатпа туслашрĕç. Зоя Васильева директор статьясене йышпа сӳтсе явма шантарчĕ.**

Нумаях пулмасть федераци, республика бюджетĕнчен уйăракан укçапа шкула юсаса çĕнетнĕ. Апат пĕçермелли оборудовани туяннă. Сенсор пӳлĕмĕ уçнă. Çакăнтах 25 тĕпренчĕке йышăнакан ача сачĕ ĕçлет. Унта та ача-пăчана хăтлă.

Районти, республикăри конкурссене, ăмăртусене хастар хутшăнаççĕ Чăваш Сурăмсем. Малти вырăнсене йышăнни, паллах, вĕрентекенсене те, вĕренекенсене те хавхалантарать. Спорт ăмăртăвĕсене хатĕрленсе учительсем çуркуннехи каникул вăхăтĕнче те волейболла вылятчĕç. Физкультура вĕрентекенĕ Константин Громов кашнинех сĕнӳ-канашпа пулăшма тăрăшрĕ.

Кăçал Республика кунне Шупашкарта кăна мар, Элĕк районĕнче те паллă тăваççĕ. Çывхаракан уява хатĕрленсе Чăваш Сурăм шкулĕнче мероприятисен планне çирĕплетнĕ. Чăваш халăх çи-пуçĕн, наци апат-çимĕçĕн куравне йĕркеленĕ. Уйран, чăкăт илсе килнĕ, палан яшки, кавăн пăтти, хуплу... пĕçернĕ.

Пĕр кунхине кашни класс вĕренекенĕсем килтен арча йăтса килнĕ. Пурне те коридора лартса тухнă. Асамлă арчасен куравĕ те çамрăк ăрун тавракурăмне анлăлатни иккĕлентермест.

Республика кунĕнче сумлă хăнасене кĕтсе илмешкĕн хатĕрленме пуçланă ĕнтĕ Чăваш Сурăмсем. Чăваш халăхĕн йăли-йĕркине упраса пурăннине, йăх-несĕл пуçланă ĕçе малалла тăснине кăтартĕç вĕсем.

Кунта чăвашлăха аталантарас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлени тӳрех курăнать. Чăваш чĕлхипе литература класĕ – чи лайăххисен шутĕнче. Алина Петрова вĕрентекен пӳлĕме хăйĕн алĕçĕсемпе илемлетнĕ.

Зоя Федоровна шкулта кадет класĕ уçасшăн. Çавна май вĕрентекенсем валли ятарлă çи-пуç çĕлетесшĕн. Халĕ ыттисен опычĕпе паллашаççĕ.

Арçын ачасем – хура костюмпа, хĕрачасем шурă, хура саппунпа, хăмăр кĕпепе шкула çӳрени парта хушшинче ларнă вăхăта аса илтерчĕ. Çĕнйĕркелӳ тапхăрĕ пуçланиччен эпир те çакнашкал çи-пуç тăхăнаттăмăр.

Маттуррисене хавхалантарма май тупаççĕ кунта. Кивĕ хут нумай пуçтаракансене, тĕслĕхрен, класри доскана чи малтан улăштарса панă.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**
Автор сăнӳкерчĕкĕ.

# Ырă ят хăварчĕ

Мария Книжкина пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ пирки пĕрре мар çырнă эпĕ. Ку статья юлашки пулĕ. Пуш уйăхĕнче ăна юлашки çула ăсатрăмăр. Хăрушă шыçă чирĕ хĕрарăма пурнăçран уйăрчĕ, анчах та ырă ĕçĕ-хĕлĕ ĕмĕрлĕхе асра юлчĕ. Кăмăллăччĕ, çынна яланах пулăшма хатĕрччĕ, ыттисен хуйхи-суйхине сирсе ярса кирек хăçан та хавхалантарма тăрăшатчĕ вăл.

1967 çулхи утă уйăхĕ. Мотоциклпа хĕр çураçма кайни халĕ те куç умĕнчех.

Актай ялне хĕр илме Шураçсем ГАЗ-51 машинăпа кайрăмăр. Кĕçĕн кĕрӳ – Ваççук Володи, купăс калаканни – Караçкă Иванĕ /халĕ вĕсем пурте пурнăçран уйрăлнă/. Авланакан каччă – Леонид. Мăн Вылăри 7 çул вĕренмелли шкул хыççăн 26 çула çитиччен колхозри тĕрлĕ ĕçе хутшăнчĕ вăл, Казахстанра тракторист профессине алла илнĕ хыççăн унтах ĕçлерĕ, çĕнĕ çерем уçакансен медальне тивĕçрĕ.

Тăван Шураç ялне таврăнсан 27 çулти каччă вырăс чĕлхипе тата арифеметикăпа экзаменсене ăнăçлă тытса Вăрнарти совхоз-техникумра вĕренме пуçларĕ, ветеринари тухтăрĕн специальноçне алла илчĕ. Пĕр çулталăк Элĕк районĕнчи «Искра» колхозра зоотехникра ĕçленĕ хыççăнах Муркаш районĕнчи Йӳçкассине ĕçе вырнаçрĕ. Çакăнта паллашать те Манькăпа Леонид.

Манька – Актай хĕрĕ, ашшĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче вилмеллех аманнă. Амăшĕ тăватă ачапа тăрса юлнă. Чи кĕçĕнни – Манька. Çав тери йывăр вăхăт пулнă, нушине пайтах курнă. Юнашарти ялта вăтам пĕлӳ илет, анчах та малалла вĕренес ĕмĕт укçа-тенкĕ çуккине пула путланать. Шкул хыççăн Смоленск облаçĕнче торф кăларнă çĕрте ĕçлет, яла таврăнсан Йӳçкасси шкулĕнче лаборантра тата тирпейлӳçĕре тăрăшать.

Шкул лаборанткипе выльăх тухтăрĕ пирвайхи хут Йӳçкасси ялĕнче тĕл пулаççĕ.

Унта ĕçленĕ вăхăтра Книжкинсен Володя çуралать. Кăштахран çемье Йӳçкассинчен Шураçа куçса килсе ватăсене пăхса пурăнма тытăнаççĕ. Манька колхозри пур ĕçе те хутшăнать: хĕлле – фермăра, çулла – уй-хирте, Леонид Тавăтра тата Ураскилтре ветеринари тухтăрĕнче вăй хурать.

Ывăлĕ Володя вăтам шкултан вĕренсе тухсан Çĕмĕрлери автошкулта пĕлӳ илчĕ. Водитель удостоверенине алла илнĕ хыççăн каччăна Совет Çарне илсе кайрĕç. 1987 çулта кĕркунне яла хурлăхлă телеграмма çитрĕ. Туркменипе Афганистан чиккинче Владимир Книжкин вилмеллех аманнă. Ку хуйхă Манькăпа Леонида тата аслашшĕпе асламăшне – Ефим Васильевичпа Александра Прокопьевнăна – чылай хавшатрĕ. 2001 çулхи çурла уйăхĕнче Леонид вилсе кайрĕ. Тăр-пĕччен юлчĕ килте Манька.

Аслă хĕрĕ Надежда Канашри медучилищĕре вĕреннĕ хыççăн Эллеккенушкăнь ялне качча тухрĕ. Элĕкри тĕп больницăра аслă медсестрара ĕçлет. Кĕçĕнни Шура Шĕмшеш каччипе çемье çавăрчĕ. Амăшне хĕрхенсе Шура вăхăтлăха Шураçа пурăнма куçрĕ. Хĕрĕн ачисемпе йăпанса пурăнчĕ Манька. Шура амăшĕн килне тĕпренех çĕнетрĕ. Савăнса кăна пурăнмаллаччĕ те, Манька йывăр чире кайрĕ.

Ял çинче ырă ят хăварчĕ хĕрарăм. Хĕрĕсем хастар та пултаруллă. Мăнукĕсем Володьăпа Алена çемьеллĕ, Мускавра тата Шупашкарта ĕçлеççĕ. Шура хĕрĕ Анастасия 9-мĕш класра вĕренет, экзаменсене тимлесех хатĕрленет. Ултă çулти Дима садике çӳрет.

Володя Книжкина савнийĕ Вероника паянхи кун та манмасть. Унăн вил тăприне пăхсах тăрать, чечексем лартать. Надежда Еремеевăпа Александр Рыков Володьăна асран кăлармаççĕ. Пĕр класра вĕреннисем: «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçат редакторĕ Маргарита Ильина, Владимир Григорьев предприниматель, Юрий Порфирьев инженер-электрик, Дмитрий Васильев, Елена Скулкина /Николаева/, Елена Алексеева, Ольга Герасимова – Çимĕкре Шураç масарĕ çинче пухăнса юлташне пуç таяççĕ.

**Владимир ЕГОРОВ.**
Элĕк районĕ.

# Путинпа «тӳрĕ лини»: тӳрĕ ыйтусем – тӳрĕ хуравсем



**Раççей Президенчĕ Владимир Путин ака уйăхĕн 14-мĕшĕнче тĕп телеканалсем тата радио урлă халăхпа вунтăваттăмĕш хут хутшăнчĕ. 3 сехет те 40 минутра вăл граждансен 80 ыйтăвне хуравларĕ. Пурĕ вара Раççейре пурăнакансем 3 миллиона яхăн ыйту янтăланă Президент валли. Нумай-и ку е сахал-и? Каярахпа политиксем тата обществăн хастарĕсем палăртнă тăрăх, çак цифра çынсем Президента шаннине пĕлтерет. Çав вăхăтрах медалĕн тепĕр енне палăртакан та пулчĕ – ыйту нумай пухăнса кайни регионти влаç ĕçлесе çитерейменнине кăна кăтартать.**

### Асра юлнă самантсем

**Экономика.** Мускавра пурăнакан хĕрарăм юлашки тапхăрта пурнăç кăткăсланса кайнине палăртнă май пурте мĕн тĕлĕшпе те пулин перекетленине палăртать. Владимир Путин мĕнпе те пулин перекетлĕрех усă курма пуçланă-и?

Владимир Владимировичăн та перекетлеме тивет-мĕн. Президент вăхăта прекетленине, вăл питĕ хаклине палăртрĕ.

**Эмел.** Президент та çынах, унăн та чирлемесĕр пулмасть. Çавăн пек чухне вăл мĕнле эмелсемпе усă курать: хамăр патра кăларнисемпе-и е ют çĕршыврисемпе-и?

Владимир Путин хăй спортпа çывăххине, сывă пурнăç йĕркине пăхăнса пурăннине аса илтерчĕ. Грипп эпидемийĕ умĕн çапах та прививка та тăвать-мĕн. Çапах та чирлесен-и? Мĕн параççĕ – çавна ĕçет. Ахăртнех, эмелсен хушшинче "хамăрăннисем" те, "юттисем" те пур.

**Путакансем.** Вуникĕ çулти Варя Кузнецовăн ыйтăвĕ Президента та аптратрĕ. Турци тата Украина ертӳçисем Эрдоганпа Порошенко путма пуçласан Путин хăшне çăлĕ? Пушшех те, пĕлтĕрхи "тӳрĕ линире" Обамăна çăлассине каланăччĕ...

Владимир Путин яланхиллех малтан шӳтлерĕ – путма шухăш тытнă çынна епле майпа çăлма пулать-ха? Унтан çапах та политик шайĕнче хуравларĕ – партнерсен енне, вĕсен кăмăлĕ пулсан, туслăх сĕнсе алă тăсма яланах хатĕр.

**"Тăшман унки".** Турципе Украина тĕслĕхĕпе ыттисем те пирĕн енне çурăмпа çаврăнсан Раççей "тăшманункине" тăрса юлас хăрушлăх çук-и?

Путин кун пек хăрушлăх пулма та пултарайманнине палăртрĕ – çапах та пирĕнпе ырă çыхăну тытма тăрăшакан патшалăх тĕнчере темĕн чухлĕ нумайрах.

**Турци.** Çак çĕршыв нумай калаçтарать юлашки вăхăтра. Президент Мускав Анкарапа туслă çыхăну малашне те тытассине каларĕ – хăшпĕр политик çакна пăсаймĕ. Çапах та Раççее кӳрентерме никама та ирĕк памĕç, унсăрăн вĕсем пирĕн май çине хăпарса ларсси те инçе мар.

**Хăй пурнăçĕ.** Хĕрарăмсене мĕн кăсăклантарать? Путин мăшăрĕнчен уйрăлнă хыççăн пĕрремĕш ледипе хăçан паллаштарать çĕршыва? Владимир Владимирович Людмила Александровна та, хăй те пурнăçпа кăмăллине палăртрĕ. Анчах та çакăн çинчен калаçма кирлех-ши? Çакна пула ăнсăртран валюта курсĕ е нефть хакĕ улшăнсан? /.../

**Ылтăн пулă.** Пермь тăрăхĕнчи Анжела, 11 çултискер, ылтăн пулăпа кăсăкланчĕ – Владимир Путин ăна тытас пулсассăн мĕн ыйтĕ? Президент хĕрачана Пушкин юмахне аса илтерчĕ – хамăр çанă тавăрса тăрăшмасан эпир те çурăк валашка умĕнче тăрса юлмăпăр-и?

**Минскри килĕшӳсем.** Киев Минск килĕшĕвне пăхăнмасан Донецкра татах вăрçă сиксе тухмĕ-и? Путин Киевăн шалти ыйтусене пăхмасăрах политикăри лару-тăрăва татса памаллине палăртрĕ. Донбасра пурăнакансен те хăйсен прависене хӳтĕлеме пĕлмелле.

**Терроризм.** Европа ирĕклĕхĕ халăхсен хушшинчи терроризмпа кĕрешмешкĕн чăрмантарать – çапла шухăшлать Раççей Президенчĕ.

**Вырăс çылăхĕ.** Вырăс усал сăмах каламасăр предложени йĕркелеймест. Çак çылăх пур-и Президентăн? Пур. Анчах та вăл чĕлхине хăйне критиклечĕ чухне кăна ирĕке ярать.

**Кампа кĕрешмелле?** МИФИ студенчĕ кĕрешме юратать ахăртнех. Вăл пирĕн ВКСăн черетлĕ мишенĕпе кăсăкланчĕ те, Владимир Путин чи малтанах путăк-шăтăк çулсемпе, хуçасăрлăх туйăмĕпе кĕрешме чĕнчĕ.

**Юлашкинчен калани.** Çакăн пек "тӳрĕ лини" пĕрремĕш хут Путин Президент пуканне йышăннă çулсенчех пуçланнă. Чи малтан 2001 çулхи раштавăн 24-мĕшĕнче иртнĕ. 2013 çулхи "рекордпа" çыхăннă – 4 сехет те 47 минут тăсăлнă вăл. 2004 тата 2012 çулсенче кун пек мероприяти иртмен.

Чи кăсăкли, ытти пĕр çĕршыв ертӳçи те граждансемпе çакăн евĕр хутшăнмасть. Анăç паллă МИХĕсем палăртнă тăрăх, вĕсен ертӳçисем темиçе сехет çапла пĕр такăнмасăр-чарăнмасăр çынсен ыйтăвĕсене хуравлаймĕччĕç. Владимир Путин Раççей çыннисен ыйтăвĕсене хуравланине пĕтĕм тĕнче сăнарĕ. Ытти çĕршыра пурăнакансем хăйсен элтеперĕсем те çакăн евĕр "лини" йĕркелеменшĕн кулянса калаçрĕç.

*Нимĕçсем.* Пирĕн ертӳçĕ те пирĕнпе çапла хутшăнсан эпир савăнăттăмăр кăна. Анчах вăл мĕн хуравласса эпĕ халех пĕлетĕп – "эпир кун пирки шухăшлатпăр-ха, хăш ыйтăва маларах татса памаллине палăртатпăр..."

*Американ.* Обама текста телесуфлер хыççăн кăна вуншар минут вулать. Унтан икĕ-виçĕ ыйтăва хуравлам пекки тăвать те студирен тухса тарать.

*Американа* Путин "арăмĕпе упăшки – çӳçипе хупăлчи" пулнине пĕлни килĕшнĕ /çак ыйтăва АПШ суйлав тытăмĕпе çыхăнтарнăччĕ/. "Клинтонсене аван пĕлет иккен вăл", – çырать Интернетра хайхискер.

"Путакан Президентсем" пирки ыйтни тавра вара *пĕтĕм тĕнче* калаçрĕ. Терроризма пулăшса тăракан Эрдогана çăлманшăн Путина ырланине палăртрĕç Анăç çыннисем.

**Хушса калани.** "Тӳрĕ лини" вĕçленсен 40 минутранах çĕршыври тĕрлĕ регионра конкретлă мерăсем йышăнма пуçларĕç. Сахалин кĕпĕрнаттăрĕ "тӳрĕ эфирта" тӳрре тухма пăхрĕ – унта Шикотан утравĕ çинче пулă тытакансене чура вырăнне ĕçлеттереççĕ-мĕн, шалу та тӳлемеççĕ. Хыççăнах РФ генпрокурорĕн заместителĕ Ю.Гулягин, Сахалин облаçĕн прокурорĕ Н.Рябов тата О.Кожемяко кĕпĕрнаттăр утрав çине тухса кайнă /çакă кăсăклă, лару-тăрăва йĕркене кĕртмелле иккенне ăнланса илнĕ-ши е пуканĕсем чĕтреме пуçланине сиснĕ-ши?/. Ĕнерех "Островной" пулă комбиначĕн" директорĕ А.Попов рабочисенчен каçару ыйтнă, шалăва парса татнă. Вăхăтра тӳлеменни... пулă начар тытнипе çыхăннă имĕш...

*Эсир вара Владимир Путина ыйту парса ĕлкĕртĕр-и? Шăтăк-путăк çул, вăхăтра тӳлемен шалу тĕслĕхĕсем пирĕн те пур. Апла, элтепĕрмĕр çитес çул та çакăн пек "лини" йĕркелессе шанмалли кăна юлать. Ыйтусем хатĕрлемелĕх вара вăхăт пур-ха.*

---

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Вĕçсе пырать машина... шăтăк-путăк çулпала

Маргарита ИЛЬИНА

Кăçалхи хĕл çул-йĕре уйрăмах начар витĕм кӳни пирки кахал çын кăна калаçмасть-тĕр. Ара, çуран утакан та, машина рулĕ умне ларакан та пĕр çулпах çӳретпĕр вĕт. Вăл вара ай-яй! хăрушшăн курăнать юр кайса пĕтнĕ майăн. Ахальтен мар пулĕ кăçал çĕнĕ каларăш сарăлчĕ халăхра – юрпа пĕрле... çул та ирĕлет. Хулара та сахал мар тарăхтарать-ха лакăм-тĕкĕм. Анчах та районсенче тата начартарах лару-тăру. Каçарăр та, каçхине хĕрарăмăн çие юлнă пулсан ирхине пĕр-пĕр районă çула тухса каялла киле çаврăнса çитиччен хырăм ӳкесси те инçе мар. Çак шухăшсемпе сиккелесе, пĕр шикленсе, пĕр тарăхса пытăм Элĕк тăрăхне çула тухнă май. Ентешĕмсем ан кӳренччĕр, тӳрех тепĕр хут каласа хăварам, кун пек лару-тăру паян – кашни районтах. Хулара та çавах.

Сиккеленинчен пуçлам. ПАЗ йышши автобуспа мар, çемçерех ГАЗельпе тухнăччĕ çула. Кашни шăтăк-путăка "тытса" пынă май ăш тавранса тухасран усăлтаракан канфет пĕр чарăнми çисе пыни кăна çăлса хăварчĕ-тĕр. Лакăм-тĕкĕм – çине-çинех. Вĕсене çакланса шар курас мар тесе водитель руле унталла та кунталла пăркалать, çавна май çулăн е транспортăн хирĕç килекен енне тухса каять, е айккипе иртме хăтланать, е, малалла ăçталла пăрсан лайăхрах-ши тесе, пĕр вăхăт пачах чарăнса ларать. Кун пек чухне хирĕç килекен машинăпа çапăнма е кювета анса кайма та чăсах. Иккĕшĕ те çын пурнăçĕшĕн хăрушлăх кăларса тăратать. Пăхатăп та, пассажирсем, ытти чухне хăрушсăрлăх пиçиххине водитель е тĕрĕслекен ыйтнипе мăкăртата-мăкăртата çыхаканскерсем, хальхинче хăйсемех чашт! кăна туртса карăнтарчĕç. Камăн пурăнас килмест? Тата кам тарăхмĕ кун пек чухне?

Çул-йĕрти инкекшĕн нумай чухне тӳрех водителе айăплама пăхаççĕ. Ӳсĕр мар-и, правилăна пăсман-и? Унра айăп пулмасан вара çуран çӳрекене тапăнаççĕ. Çав вăхăтрах шăпах çулйĕр пахалăхĕ юлашки çулсенче инкексен тĕп сăлтавĕ пулса тăрать. Анчах та ăна пăхса тăраканçене е саракансене кашни утăмрах айăп тыттарни курăнмасть. Тепĕр тесен, ăçтан тыттарăн, çакна саккун палăртман пулсан?

Çын тĕлĕнме пăрахман тăк пурăнать теççĕ. Çаплашин? Çак кунсенче чăнласах тĕлĕнмелле информаци илтрĕм. Раççейре çул-йĕре пăхса тăрас тĕлĕшпе ГОСТ 1993 çултанпа улшăнман-мĕн, ăна çĕнĕрен сарас стандартсене вара 1985 çулта çирĕплетнĕ. Çапла, çамрăклăх çулĕсем. Питĕ лайăх ас тăватăп – ялĕпе те 1-2 машина кăначчĕ, вĕсен те хуçисем хулара пурăнатчĕç. Канмалли кунсенче яла килекенскерсем çине ăмсанса пăхаттăмăр. Халĕ вара тăван тăрăха каятăп та – хăшĕ-пĕрин 1 мар, 2-3 машина та пурришĕн савăнатăп: пурнăç шайĕ ӳснĕ апла ял çыннин. Йăлтах ӳсет– пурнăç шайĕ, машина хакĕ, ун тĕлĕшпе хывакан налук, штрафсем... Никама та кăсăклантармасть: пур-и санăн çемье бюджетĕнче укçу, çук-и, влаçăн пĕр сăмах – тӳлемелле. Пысăк пукан йышăнакансенчен /апла пысăк ыйтусем татса параççĕ, çавăнпа пысăк шалу илеççĕ/ çул-йĕр тĕлĕшпе /халĕ – кирек мĕнле ыйтупа та/ йĕрке тума ыйтсан вара вĕсен каллех пĕрре, анчах урăх сăмах: бюджетра укçа çук. Тĕлĕнмелле, хысна бюджетĕнче укçа çук, çемье бюджетĕнче вара ăçтан пулмалла? Тĕлĕнмелли татах пур-ха. Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть, халĕ вара пушшех те питĕ пысăк хăвăртлăхпа аталанса пырать. Çĕнĕ технологисем пирки тăтăш çыратпăр. Çул-йĕре юсас тĕлĕшпе те пур вĕсем. Пирĕн çĕршывра унпа мĕншĕн усă курманнине вара калама пултараймастăп /тен, хуравĕ кăшт çӳлерех вырнаçнă?/. Хăш-пĕр меслет, калăпăр, çул çинчи шăтăка туххăмрах саплама май парать. Анчах та ăçта васкамалла çул-йĕр ĕçченĕсен? Саккунпа килĕшӳллĕн, вĕсен çак ситменлĕхе 10 кунра пĕтерме ирĕк пур. Танлаштарма, 71 çул каялла пирĕн мухтавлă çĕршыв парăнтарнă Германи шăтăк-путăка хуплама хăйĕн ĕçченĕсене... 1 талăк парать. Чикĕ леш енне тухкаласа курнă та, çавăнпа, паллă пĕр кулăшри пек, асатте каласа кăтартмасăрах пĕлетĕп – çатма пек унти çулсем. Пĕлĕшĕм, 60 çултан иртнĕ хĕрарăм, Америкăра пĕр вăхăт пурăннă хыççăн Раççее таврăнсан руль умне лармарĕ – чикĕ леш енче вара машинăпа хăех çӳретчĕ. "Хăратăн", – пытармарĕ сăлтавне. Хăрамашкăн сăлтавĕ те пур çав... Шиксĕр çӳрес тесен автошкулсенче çамрăксене машинăна пăркалама кăна мар, экстремаллă лару-тăрура çӳретме хăнăхтармалла тӳрех...

Çивĕч ыйтусемпе сăмах хускатнă май темăпа çыхăннă цифрăсемпе паллаштараканччĕ вулакана. Хальхинче çак йĕркене пăхăнас килмерĕ, инкек çинчен калаçса çурхи кăмăла пăсар мар. Капла та пĕр тĕслĕх асран тухмасть. Кăвакарчăнсем пек шăкăлтатса пурăнакан мăшăр çул çинче инкеке лексе вырăнтах ĕмĕрлĕхех куçĕсене хупрĕ. Инкек сăлтавĕ – шăпах çул çинчи путăк: "тимĕр урхамах" урапи унта çакланса хирĕç килекен транспорт енне вирхĕннĕ, тепĕр машинăпа çапăннă.

Çак ыйтăва татса парасса, яп-яка пулмасан та, хăрушсăр çулпа çӳреме пуçласса тем пек шанас килет те çав. Тепĕр тесен, пуçлăхсем те хальлĕхе вертолетсем çине куçса ларман, пирĕн пекех тухаççĕ çула. Е вĕсене хăйсен хăрушсăрлăхĕ те пăшăрхантармасть-ши?

Хушса çырни. Тĕлĕнтермĕш – çак шухăшах ака уйăхĕн 14-мĕшĕнче иртнĕ "тӳрĕ линире" Раççей Президенчĕ Владимир Путин палăртрĕ: "Пуçлăхсем те çав çулсемпе çӳремеççĕ-и вара?" Мероприяти шăпах çак ыйтуран пуçланчĕ, Омскра пурăнакан 29 çулти Мария Черненко, "РЖД" бухгалтерĕ, шăтăк çине шăтăк, машинăсем çĕмĕрĕлни, ураписем туха-туха /!/ ӳкни, пуçлăхсем вара йăшалт та туманни пирки тарăхса калаçрĕ. Владимир Путин Çул-йĕр фончĕ пирки сăмах хускатрĕ. Анчах унти укçа-тенкĕпе "шăтăк хыснана" пула урăх тĕллевпе усă курни тăтăшах тĕл пулать. Çапах та компромисс тупмаллах. Омск 300 çул тултарнине паллă тума хатĕрленет, унччен хулара йĕрке-илем кĕртмеллех. Кур-ха, асамлă иккен Президент сăмахĕ! Темиçе минутранах Омск ертӳçисем эфира тухрĕç, çу уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлнех çул-йĕрĕн пысăк пайне юсама сăмах пачĕç. Ыйту çуралчĕ-ха. Пирĕн те юбилее, Шупашкар 2019 çулта 550 тултарасса, е Путин патне кам та пулин çапла шанкравласса кĕтмеççĕ-тĕр, çулсене йĕркене кĕртессе питĕ шанас килет те...




ÇУТ ÇАНТАЛĂК

# Пăла юхать сарăлса…
# Сĕве патне васкаса

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Вырăнти ертӳçĕсем тăрăшнипе темиçе çул каялла Пăлана тракторпа пĕр енчен пĕвелесе шыв çулне пăртак тӳрлетме май килнĕ, колхозăн ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрĕ çине кăна кĕреймен. Анчах та çав çул çĕр шăнманнипе çулталăкранах татăлса кайнă пĕве.

Ыттисем пек лашапа та, тракторпа та мар, çип карса çĕрулмие кĕреçепе лартаççĕ Кирилловсем. Шăтса тухнă пахчаçимĕçĕ пĕрре мар çырмана ишĕлсе аннă вĕсен. Пулăхлă хура тăпра кашни çул шывпа юхса кайни канăç памасть вĕсене.

– Вырăнĕ илемлĕ пирĕн. Пахча хыçĕнче çăтмахри евĕр, шывĕ шăнкăртатса юхать, шăпчăксем юрă шăрантараççĕ. Анчах та çĕрĕ ишĕлет-çке, çакна пĕлсен пирĕн ывăла качча пыракан пулĕши, кунта çĕрулми те ӳстерме çук тесе тиркешĕç, уншăн та кулянатăп. Ял çыннишĕн çĕр хаклă-çке. Валера ялтах юласшăн, хула пурнăçне килĕштермест, кунта унăн ĕмĕр пурăнмалла, – пăшăрханать Вера Владимировна.

Саркаланса юхакан Пăла уйрăмах çуркунне, пăр кайнă май, çырана вăйлă ишет. Йывăç лартни те усăсăр, вăл тымар ярса вăй илеймест, юхса çеç каять-мĕн.

– Эпĕ Каншеле Кĕçĕн Арапуçран 1973 çулта качча килтĕм. Ун чухне çĕр çав териех ишĕлнине астумастăп. Хальхи пысăк çырма вырăнĕнче пирĕн пахчаччĕ. Тепĕр енĕпе нимле хăва та, çирĕк те, çĕмĕрт тавраш та çукчĕ, вăрмантан çурхи шывпа юхса килсе никам лартмасăрах ĕрчет халь. 25 çул пире канăç памасть çак ыйту. Шыв çулне маларах пăрса ямалла пулнă çав, ун пирки вăл вăхăтра никам та шухăшламан. Техникăсăрах, çĕре кашни кун кĕреçепе чавсан та çак кукăра халĕччен тӳрлетме май килетчĕ, – кулянать Вера Кириллова.

Аякра мар пурăнакан Красильниковсен те юханшыва пула канăç çухалнă.

– Çĕр вăрттăн – тĕпĕнчен – ишĕлет. Мăнуксене пахчана та кăларма хăратпăр, кашни утăмне сыхласа тăратпăр, çырмана каясран хăрушă. Лупас кивелчĕ, ăна ăçта лартмаллине те пĕлместпĕр халь. Тĕрĕссипе, вырăнĕ те çук. Кĕркунне çĕнĕ мунча хăпартрăмăр, вăл та çырма хĕрринчех, лапка çинче милĕкпе çапăннă хушăра юхса кăна каяс марччĕ. Çулла ĕнене пахчана кăкарнăччĕ. Çĕр тăрук ишĕлсе аннă та хайхискер Пăлана кĕрсе ӳкнĕ. Çырмаран аран туртса кăлартăмăр, юрать, пăявĕ татăлнă, унсăрăн хамăр таврăннă çĕре çакăнса тăратчĕ ĕне, – кулянса калаçать Альбина. Вăл сусăр икĕ хĕрĕпе пурăнать. Йĕркеллех çуралнăскерсем кайран хавшама тытăннă-мĕн. Мăшăрĕ 15 çул каяллах çут тĕнчерен уйрăлса кайнă хыççăн хуçалăха хĕрарăм пĕчченех тытать.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕнче улттăмĕш çул тăрăшакан В.Секретова та çак ыйту ĕçе вырнаçнă кунранпах канăçсăрлантарать. Кирилловсен анкартине пирĕнпе пĕрле вăл тепĕр хутчен пырса курчĕ.

– Пĕчĕк пĕве мар-çке, пирĕнтен кăна килмест. Каншел ялĕ айккипе юхакан Пăла юханшывĕн çулне йĕркелемеллин проект документацийĕ пур. Ăна 2011 çултах хатĕрленĕ. 2012 çулхи авăн уйăхĕнче проекта Чулхулара хӳтĕленĕ, ЧР строительство министерстви экспертиза витĕр кăларнă. РФ Правительствин йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн федераци бюджетĕнчен Пăла юханшывĕн çулне йĕркелеме 16 миллион тенкĕ укçа уйăрма палăртнă. 2016 çулта шăпах çак ыйтăва татса памаллаччĕ, кризис пирки-ши, хальлĕхе пĕр сăмах та шарламаççĕ, чăрмав сиксе ан тухтăрах, – ăнлантарчĕ Владимир Алексеевич.

Çапах та ыррине шанас килет. Каншелти Кирилловсемпе Красильниковсем ахальтен темиçе çул пăшăрханмаççĕ пулĕ. Çĕр хакне лайăх ăнланать ял çынни. Ĕмĕр-ĕмĕр пурăннă вырăна тăван ачи-пăчи валли упраса хăварма ĕмĕтленет. Пулăхлă хура тăпра çулсерен шывпа юхса кайса ахалех пĕтни те ыраттарать вĕсен чунне.

**Елена АТАМАНОВА.**

ЕЙӲ

## Шыв хăпарнăран кĕпер арканнă



**Нурăсри Мăн Çавал урлă хывма пуçланă кĕпере шыв юхтарса кайни, çакă салана икĕ пая уйăрни çинчен эрнипех калаçатпăр. Тĕрĕссипе, çурхи шыв шар кăтартма пултарасса Вăрнар районĕнчи ятарлă комисси малтанах палăртнă. Çавăнпах ейӳрен сыхланас тĕлĕшпе çуран утакансем валли каçă туса панă, асăрхаттару паллисем тата транспорт водителĕсен çавра çулпа каймаллине кăтартакан щитсем вырнаçтарнă, дежурство йĕркеленĕ.**

Ку объект пĕлтĕр те чăрмав кăларса тăратнă. Ун чухне Мăн Çавал урлă выртакан çула 5 сехетрех йĕркене кĕртме май килнĕ. Хальхи лару-тăру чылай кăткăсрах. Çанталăк тăрук ăшăтнăран шăматкун юханшыв палăрмаллах хăпарнă. Вырсарникун вара вăхăтлăх кĕпер татăлни пирки Нурăс çыннисем çăлав службине пĕлтернĕ. «Нурăс – Патăрьел – Елчĕк» автомобиль çулĕ хупăннă. Транспорт Аçăмçырми –Шуркасси Ишек тата Ярмушка çулĕпе çавăрнать. Автостанцирен тухакан маршрут автобусĕсем Шăхасан тата Красноармейски урлă иртеççĕ.

Çак кунах ЧР транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министрĕ Владимир Доброхотов инкек вырăнне çитнĕ. Правительство тунтикунхи канашлăвĕнче те çак ыйтăва сӳтсе явнă. Михаил Игнатьев Пуçлăх йывăр тиевлĕ транспорта ял тăрăхĕнчи çула çĕмĕрме памалла марри тата лару-тăрăва тĕрĕслесе тăмалли çинчен каланă.

Планпа çак кĕпере пĕлтĕрхи авăн уйăхĕ тĕлне юсаса пĕтермелле пулнă. Анчах малтанхи подрядчик – «Чăвашавтодор» АУО – ĕçе вăхăтра вĕçлеймен. «Чăвашупрдор» специалисчĕсем халăх нушине ăнланасса, кĕпере хăвăртрах хута ярасса шанаççĕ Вăрнарсем.

Мăн Çавал шыв шайĕ чакса пырать. Палăртнă виçене çитсен кĕпере юсама пуçлĕç. Çитес вăхăтрах автомобиль çулĕ йĕркеленĕ.

**Марина ГРИГОРЬЕВА.**

КĔСКЕН

## 100 килограмм батарейка пуçтарăннă

Иртнĕ эрнере «Мода çурчĕ» суту-илӳ комплексĕ патĕнче çутçанталăк тусĕсем усă курнă батарейкăсене пуçтарнă. «Экологи» тата «Симĕс хула» организаци ертӳçисем Сергей Лебедевпа Федор Алексеев юрăхсăра тухнă çав хатĕр çутçанталăка сиен кӳни çинчен каласа кăтартнă.

Акци вăхăтĕнче хула çыннисем 100 килограмм батарейка илсе пынă. Юхса тухсан пĕри кăна 20 тăваткал метр çĕре варалас хăрушлăх пур. Мероприяти йĕркелӳçисем шутланă тăрăх, çакă 6000 тăваткал метр лаптăка химипе сиенленесрен упрама май парать. Вĕсене Челябинскри усă курнă батарейкăсемпе ĕçлекен завода ăсатĕç.

Çак мероприятие чылайăшĕ ачи-пăчипе пынă. Çутçанталăка сыхламаллине пĕчĕкренех ăша хывни нимрен паха.

## Перекетлĕх урокĕ

Çак эрнере Чăваш Республикинче Пĕтĕм Раççейри вĕренӳ проекчĕ – «Шыв управçисем» экологи урокĕ – вăй илчĕ. Чи малтанхине йĕркелӳçĕсем Шупашкарти 64-мĕш шкулта 5-мĕш класс ачисемпе ирттернĕ. Шăпах çакăнта экологи бригади ĕçленине палăртса хăварас килет. Вĕрентекенсем йывăç лартаççĕ, кайăксене сăнаççĕ-апатлантараççĕ, кивĕ хут пуçтараççĕ.

Çакнашкал уроксене ака уйăхĕн 20-мĕшĕччен ирттерме палăртнă. Сăмах май, ку проектпа 2015 çулти çуркуннеренпе ĕçлеççĕ. Унтанпа Раççейри 5500 шкулта шыв перекетлемелли çинчен калаçнă.

Ку проекта пур шкул та хутшăнма пултарать. Педагогсен ятарлă пĕлӳ илмелле мар. Сайтра регистрациленсенех методика материалĕсемпе паллашма, видео курма пулать.

Проекта хутшăнакансене онлайн карттăра паллă тăваççĕ, сертификат, Тав çырăвĕ параççĕ. Урок вĕçĕнче ачасем хăйсемех кĕсье кĕнеки хатĕрлеççĕ. Унта шыва перекетлемелли сĕнӳ-канаш çыраççĕ.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

ÇЫРĂНТАРУ – 2016

**2016 çулăн II çурринче илсе тăмашкăн**
***ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен***
**«ХЫПАРА» – 736,02 тенкĕпе,**
**«ХЫПАР-эрнекуна» 338,34 тенкĕпе**
**кашни çыхăну уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ**



# Паралимпиада кĕтет

**Куç курманнисен спорчĕн федерацийĕ малтан та пулнă-ха. Анчах вăл кирлех мар пек туйăннă-ши – хупăннă. 6-7 çул каялла саккунсем улшăнма пуçласан вара унăн пĕлтерĕшĕ çирĕпленнĕ. Çĕнĕ саккунсем тăрăх спорт министерстви спорт федерацийĕсемпе çеç çыхăнса ĕçлеме пултарать-çке. Çавăнпах республикăри куç курманнисен обществи /унăн ертÿçи Юрий Сергеев/ хăйсен уйрăмне йĕркелесси пирки пуç ватма пикеннĕ. Раççей спорт реестрĕнче те куç курманнисен спорчĕ пур-çке, 21 дисциплина кĕрет унта. Çапла чылай тăрмашнă хыççăн 2013 çулхи пушăн 21-мĕшĕнче йĕркеленех ăна. Çулталăк вĕçĕнче аккредитаци тухса тĕрлĕ ăмăрту irттерме ирĕк илнĕ.**



● ДМИТРИЙ ФАДЕЕВ.

Раççейри куç курманнисен спорчĕн федерацийĕн Чăваш республикинчи уйрăмĕн ĕçне Дмитрий Фадеев йĕркелесе пырать. Федераци паянхи кун епле пурăннипе, çитĕнĕвĕсемпе, çитменлĕхĕсемпе паллашма шăпах унпа курса калаçрăмăр та.

– Куçĕ курманнипе сусăр шутланакансем, РФ сывлăх сыхлавĕн министерстви каланă тăрăх, йышлансах пыраççĕ иккен. Суккăр çуралакан ачасем те чылай, вăхăт иртнĕ май курма пăрахакан та пур. Республикăра суккăр çынсем халăхăн 1 проценчĕ пулĕ тесе шутлаттăм. Нумаях пулмасть ку цифра 3 процентпа танлашнине илтрĕм те тĕлĕнтĕм. 30 пин яхăн çын япăх курать е курмасть те иккен, – пуçларĕ калаçăва Дмитрий Валерьянович.

Çав вăхăтрах куç курман кашни ватă е вĕтĕ спортпа туслашаять. Ара, спортăн çăмăл тĕсĕсем те пур-çке – шашка, шахмат. Вĕсем ăс-тăна та аталантараççĕ, çирĕплетеççĕ. Çав вăхăтрах нумай вăйхал илекеннисем те пур. Сăмахран – армрестлинг, пауэрлифтинг. Вĕсемпе тухтăр ирĕк парсан çеç туслашма юрать. Куç курманнисем йывăр тата çăмăл атлетикăна та кăмăллаççĕ.

– Федерацире 100-е яхăн спортсмен шутра тăрать. Вĕсем – спортпа чăннипех те туслисем, çитĕнÿ тăвакансем. Вĕсен хушшинче Раççей пĕрлештернĕ командин йышне кĕнисем те пур.

Çăмăл атлетсенчен виççĕшне уйрăммăн палăртас килет: Александр Николаев, Александр Сорокин тата Святослав Евграфов. Вĕсем чăннипех те малалла туртăнаççĕ, ăнтăлаççĕ. Паралимпиадăна хутшăнас тĕллевлĕ. Кăçал Бразилире иртекен вăййа хутшăнма ĕлкĕреймеççĕ-ха, анчах малашлăха шанатпăр. Лайăх кăтартусемпе савăнтараççĕ вĕсем.

Сĕтелçи теннисĕ аталанса пырать. Тĕрлĕ шайри ăмăртура Чăваш Ен ятне çĕклекенсем пур, – çитĕнĕвĕсене палăртнă май хавхаланăвне пытармасть федераци ертÿçи.

### Тренерсем çитмеççĕ

Чăннипех те пысăк çитĕнÿсем пирки калас пулсан, Лондонри Паралимпиадăна та аса илмелле. Унта Анна Сорокина Пушкăртстана «чапа кăларса» хутшăннă-ха, анчах ăна Чăваш Ен те хăйĕн хĕрĕ вырăнне хурать. Ара, вăл Шупашкарти куç курманнисен интернатĕнче вĕреннĕ, кунта пурăннă чухнех çăмăл атлет Раççей чемпионĕ пулса тăнă. Кайран çеç пурăнма Уфана куçнă, çитĕнÿпе палăрнă. Малтанхи утăмĕсем вара пирĕн республикăна тивĕçнĕ.

– Елена Иванова та иртнĕ Паралимп вăййисенче виçĕ ылтăна тивĕçрĕ. Унта вăл урăх чирпе нушаланакан пек хутшăнчĕ пулин те малтан куç япăх куракансен интернатĕнчен вĕренсе тухрĕ. Çавăнпах ăна та эпир хамăрăн хĕр пек йышăнатпăр. Спортри пĕрремĕш утăмĕсене те вăл шăпах куç курманнисен хушшинче турĕ, – паллаштарчĕ Дмитрий Фадеев.

Пысăк çитĕнÿ тăвакан воспитанниксем федерацире татах та пур. Тренерсем те лайăх. Анчах сахал иккен. Çитмеççĕ. Çакă пăшăрхантарать те Дмитрий Валерьяновича. Çав вăхăтрах шанăç кÿрекенни те пур – çамрăксем ĕçе пысăк хавхаланупа пуçăнаççĕ.

– Куç курманнисемпе ĕçлеме пачах та йывăр мар. Пĕр чĕлхе тупмалли вăрттăнлăхĕсене, майĕсене çеç пĕлмелле. Республикăра куç курманнисен спортне аталантарассинче Василий Чернышов тÿпи пысăк. Халĕ вăл пирĕнпе çук ĕнтĕ. Василий Николаевич куç курманнисен интернатĕнче ĕçлесе унтан çирĕп утăмлă нумай çамрăка кăларнă. Шашка, шахмат, çăмăл атлетика енĕпе чемпионсем ÿстернĕ, – тет хăй те шахматла выляса нумай çитĕнÿ тунă Дмитрий Фадеев.

Халĕ вăл куç курманнисене çеç мар, сывă ачасене те шахматла выляма вĕрентет. Шашкăлла вылякансене хатĕрлекенсем пирки те ыррине çеç калать. Вĕсенчен уйрăмах Раççей чемпионĕсене хатĕрленĕ Андрей Унтинпа Вячеслав Суховича палăртать.

### Ăнтăлмалла, малаллах туртăнмалла

– Куç курманнисене спортпа туслаштарас кăтартупа Раççейре вăтамрисем эпир. Кÿршĕллĕ Мари республики пиртен чылай малта паллах. Çамрăксем хастартарах унта. Хăш-пĕр регион спортăн пĕр тĕсне çеç тимлĕх уйăрать. Дагестанра, сăмахран, дзюдо аталаннă. Пирĕн те туртăнмалла, çÿлелле хăпармалла. Ĕçлемелли нумай-ха.

Спорт реестрне кĕнĕ 21 тĕсрен республикăра хăшĕ-пĕри çеç аван вăй илнĕ: шашка, шахмат, çăмăл атлетика, спорт туризмĕ. Йĕлтĕрпе ярăнассипе ишессине вăйлатма тăрăшатпăр.

Вăйăсене аталантарас килет. Сăмахран, футбол. Питĕ кăсăклă вăл. Галбол та çаплах. Вăл вара пирĕн патра пачах аталанман. Пĕлтĕр çеç шухăша путрăмăр кун пирки. Питĕ паха вăйă. Унта сасă кăларакан çăмхапа вылямалла. Вăл куç курманнисене тавралăхра хăйсене хăтлă туйма вĕренме пулăшать.

Куç курманнисемшĕн спорт пысăк çитĕнÿсен çăлкуçĕ пулмалла мар. Сусăрсемшĕн спорт – реабилитаци мелĕ. Уйрăмах халĕ кирлĕ çакă. Ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен республикăри куç курманнисен мĕнпур реабилитаци центрĕ хупăнать. Вĕсенчен чылайăшĕ совет тапхăрĕнченех ĕçленĕ, чылайăшĕ витĕмлĕхĕпе çĕршывĕпе палăрнă. Çавăнпах спорт малашне тата та кирлĕрех пулĕ. Футболпа гантболах илер, сасса илтсе епле куçмаллине хăнăхма пулăшаççĕ вĕсем. Çавăнпах пирĕн тĕп тĕллев чемпионсем хатĕрлесси çеç мар, куç курманнисене обществăра хăйсене хăтлă туйма вĕрентесси, – палăртать Дмитрий Валерьянович.

Çак тĕллевпе куç курманнисен обществипе пĕрле нумай ĕç туса ирттереççĕ. 2010 çулта куç курманнисене компьютерпа ĕçлеме вĕрентес тĕллевпе компьютер класĕсем уçнăччĕ вĕсем. Тата ытти нумай проекта та пурнăça кĕртеççĕ. Спартакиада ирттерес умĕн волонтерсене сусăрсемпе епле хутшăнмаллине вĕрентнĕччĕ. Тĕрлĕ семинар, тĕлпулу йĕркелеççĕ.

### Йывăрлăхсене чăтаймасăр...

Спортра пысăк çитĕнÿсем тума ăнтăлакансенчен пĕри – Раççей чемпионĕ Александр Николаев. Муркашра çуралса ÿснĕ каччăна спортпа физкультура вĕрентекенĕ Василий Чернышов куç курманнисен интернатĕнче вĕреннĕ чухнех туслаштарнă. Çамрăк пултаруллине тÿрех асăрханă вăл.

ЧППУн истори факультетне вĕренме кĕрсен те сывă пурнăç йĕркинчен пăрăнман Саша, тренировкăсене куллен çÿренĕ. Диплом илсен çур çултанах пĕр ăмăрту хыççăн йĕкĕте Раççей пĕрлештернĕ командин йышне илнĕ. Икĕ çул пулнă вăл унта. Çав вăхăтрах Шупашкарти 2-мĕш коррекци шкулĕнче хăйĕн профессийĕпе истори вĕрентекенĕнче тăрăшнă. Паллах, çăмăл пулман. Ĕç хыççăн канмасăрах тренировкăна чупнă, каçхине урока хатĕрленме тивнĕ. Çывăрса та тăранайман. Организм ку йывăрлăха чăтайман. Сывлăхĕ хавшанăран çулталăк сипленме тивнĕ. Пĕлтĕр çулла вара Саша каялла спорта таврăннă.

– Малтан Шупашкарта урăх тренер патне çÿрерĕм. Анчах унăн мелĕсем тивĕçтермерĕç. Ун патĕнче кĕске дистанцисене парăнтаракансем хатĕрленеççĕ. Çавăнпах манăн пĕччен чупма тиветчĕ, – каласа кăтартать Саша.

Халĕ вăл Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен шкулĕн çамрăк тренерĕ Роман Другов патĕнче хатĕрленет.

– Кунта куçнăранпа хама та лайăхрах туятăп, тренировкăри кăтартусем те курăмлă, хăвăртрах çитĕнеççĕ, хам та сисетĕп, – хавхаланăвне пытармарĕ яш.

– Куç курманнисемпе – Сашăпа тата Святославпа – тăватă уйăх каялла çеç ĕçлеме пуçларăм. Святослав кĕске дистанцисене чупать, Саша – вăрăммисене. Пултаруллă, маттур каччăсем. Саша – çирĕп тĕллевлĕ, тăрăшуллă. Кашни тренировка хыççăн ÿсĕмĕ палăрать. Çулла Шупашкарта иртекен Раççей чемпионачĕ иртет, унта хутшăнма хатĕрленетпĕр, çавăнпах куллен ирхи кÿлĕм 4 сехет, каçхи кÿлĕм 2 сехет вăй хуратпăр. Тепĕр чухне эрнере пĕрре мунчана та каятпăр. Çан-çурăма çăмăллатмалла-çке. Тĕнче чемпионатне лекесчĕ, – палăртать Николай Казаков хатĕрленĕ спорт мастерĕ Роман Сергеевич.




● ДЕНИС ГАВРИЛОВПА АЛЕКСАНДР НИКОЛАЕВ.

### Юнашар – шанчăклă тус

Нумаях пулмасть тата малтан пĕччен чупнă Саша лидерпа – ертсе пыраканпа – хатĕрленме тытăннă.

– Çăмăл атлетикăпа 10 çул ытла туслă эпĕ. Кăçал Сашăпа хатĕрленме сĕнчĕç те килĕшес терĕм. Интереслĕ те кун пек. Пачах урăхла. Саша çитĕнÿ тăвас тăк вăл пирĕн пулать-çке. Халĕ чупнă чухне те хам çинчен кăна мар, тус çинчен те шухăшлатăп. Пăхса пыратăн, чупнă вăхăтрах сĕнÿсем паратăп. Икĕ уйăхра пысăк ĕç турăмăр. Пĕр-пĕрне хăнăхрăмăр, – шухăшне пытармасть спорт мастерĕн кандидачĕ Денис Гаврилов.

– Ертсе пыракан пурри чылай лайăхрах. Ăна хăвалатăп-çке. Малтанхи тренировкăсенче хама ăмăртури пекех туятăм, ун хыççăн чупатăп-ха та. Спортзалра çутă тĕрлĕрех: çутă-тĕттĕм, çутă-тĕттĕм. Çавăнпах куçра вылять, çавраšкасем тухаççĕ, ориентир та çухалать. Иккĕн чухне хăвна çăмăл туятăн. Пырса тăрăнмасса пĕлетĕн – шанчăклă тус çумра, – тет Саша.

Ашшĕ кĕçĕн ывăлĕ 5 çулта чухнех вилнĕрен амăшĕ икĕ ачине пĕччен ÿстернĕ. Тамара Михайловна аслă ывăлĕ спортпа туслашма тĕв тунине ырланă çеç, пачах хирĕçлемен. Пушшех те, тăванĕсем те хавхалантарса пыраççĕ.

Хăйĕншĕн çитме çук тĕллевсем пачах лартмасть Саша. Мĕн пултарнине кура çеç ĕмĕтленет. Кăçал Раççей чемпионатĕнче лайăх кăтартусемпе палăрса тепĕр çул тĕнче шайĕнчине хутшăнас шанчăкне пытармасть вара. Малашне, тен, Паралимпиада та йышăнĕ ăна.

**Татьяна НАУМОВА.**

Автор тата Д.Фадеев архивĕнчи сăнÿкерчĕксем.



## АПАЧĔ ТУТЛĂ ПУЛТĂР



### Хĕрлĕ кăшман катлечĕ

**3 хĕрлĕ кăшман, 100 грамм манна кĕрпи, 2 шăл ыхра, укроп, тип çу, тăвар, авăртнă пăрăç кирлĕ.**

Хĕрлĕ кăшмана фольгапа чĕркесе духовкăра пĕçермелле, хуппинчен тасатса теркăламалла. Ăна манна кĕрпипе, авăртнă пăрăçпа, тăварпа пăтратмалла. Çак хутăшран катлет тумалла, тип çупа ăшаламалла.

### Кишĕр хăпартăвĕ

**3 кишĕр, 100 грамм иçĕм, 125 грамм услам çу, 100 грамм сахăр, 2 çăмарта, 350 грамм çăнăх, 1 чей кашăкĕ кăпăшлантаракан хутăш, авăртнă 1 чей кашăкĕ лимон хуппи кирлĕ.**

Теркăланă кишĕре шĕтернĕ иçĕмпе пăтратмалла, услам çу, тăвар, сахăр, кăпăклантарнă çăмарта, лимон хуппи хушмалла. Çăнăхпа кăпăшлантаракан хутăш ярса чуста çăрмалла. Кишĕр хăпартăвне духовкăра пĕçермелле.

### Пулă яшки

**1 банка пулă консерви, пуçлă 1 сухан, 1 кишĕр, 1-2 çĕрулми, пĕçернĕ 1 çăмарта, укроп, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

Кишĕре, çĕрулмие, сухана тăваткалласа турамалла. Пахчаçимĕçе вĕрекен шывра пĕçермелле. Юлашкинчен пулă консерви, тăвар, пăрăç хушмалла. Сĕтел çине лартиччен яшкана вĕттĕн туранă çăмартапа укроп ямалла.

### Манна кĕрпипе, шăн çырлапа

**1,25 миллилитр сĕт, 200 грамм манна кĕрпи, 200 грамм сахăр, кокос хăрпăкĕ, шăн çырла кирлĕ.**

Сĕте вĕретмелле, манна кĕрпи, сахăр, кокос хăрпăкĕ хушмалла. Сĕтел çине лартиччен шăн çырла хумалла.

### Çăмартапа, кăлпассипе

**2 çăмарта, 100 грамм кăлпасси, 2 çĕрулми, 1 кишĕр, 2 стакан шыв, тăвар кирлĕ.**

Тăваткалласа туранă çĕрулмие, çурма çаврашкан каснă кишĕре вĕрекен шыва ямалла, тăвар хушмалла. 15 минутран пĕрчĕлесе туранă кăлпасси ямалла. 5 минутран пăтратнă çăмартапа çăрατмалла. Тепĕр 5 минутран яшка хатĕр.

### Вĕри бутерброд

**1 батон, 100 грамм шăратнă сыр, 100 грамм ветчина, 100 миллилитр шĕвĕ хăйма, 20 грамм услам çу кирлĕ.**

Батон татăкĕсене пĕр енчен шĕвĕ хăймапа йĕпетмелле. Сырпа ветчинана теркăламалла, ирĕлтернĕ услам çу хушмалла. Çак хутăша батон çине сĕрмелле. Бутерброда 5-7 минутлăха духовкăна лартмалла.

### "Иçĕм çырли сапаки" салат

**1 банка шпрот, пĕçернĕ 3 çăмарта, пуçлă 1 сухан, 100 грамм сыр, 1 банка симĕс пăрçа, 200 миллилитр майонез, тип çу, тăвар, пăрăç кирлĕ.**

**Илемлетме симĕс пăрçа, петрушка çулçи хатĕрлемелле.**

Тăваткалласа туранă сухана тип çупа ăшаламалла. Çăмарта саррипе шуррине уйăрăммăн тата сыра теркăламалла. Çимĕçсене сийлесе /çăмарта шуррин çур пайĕ – сухан – шпрот – симĕс пăрçан çур пайĕ – çăмарта шуррин çур пайĕ – çăмарта саррипе сыр/ хăпартмалла. Кашни сийе, çиелтисĕр пуçне, майонез сĕрмелле.

Симĕс пăрçаран иçĕм çырли сапаки тумалла, айккине петрушка çулçи хумалла.

### Кишĕрпе, панулмипе, мăйăрпа

**50 грамм кишĕр, 50 грамм панулми, 20 грамм аçтăрхан мăйăрĕ, 10 грамм пыл, 10 грамм петрушка, 10 грамм тип çу, 10 грамм лимон кирлĕ.**

Кишĕре теркăламалла. Вăрринчен тасатнă панулмие тăваткалласа турамалла. Вĕтетнĕ аçтăрхан мăйăрне тип çупа ăшаламалла. Çимĕçсене вĕтетнĕ петрушкăпа, лимон сĕткенĕпе, пылпа пăтратмалла.

### Лапшапа купăста

**600 грамм купăста, пуçлă 2 сухан, 50 грамм çу, 200 грамм лапша, тăвар кирлĕ.**

Вĕттĕн туранă купăстана тип çупа ăшаламалла, çурма çаврашкан каснă сухан ямалла. Лапшана уйăрăммăн пĕçерсе сăрхăнтармалла. Купăстапа лапшана хутăштармалла. Ăна пулăпа та, какайпа та çиме юрать.

## ПАХЧАÇĂ КĔТЕСĔ

# Çурхи сĕнӳсем

**Сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăран хими им-çамĕсĕр те, халăх мелĕпе, хăтăлма май пур.**

Çуркунне чылай пахчаçă сăтăрçăсене алăпа пуçтарма тăрăшать. Сывлăш 10 градус таран ăшăнмасăр хурт-кăпшанкă «вăрансах çитеймест». Йывăç-тĕм çинчен вĕт-шакăра пĕр-пĕр япала çине силлемелле. Тепĕр 5 кунран – каллех. Нăрăсем çавçавах курăнсан ан ӳркенĕр, тата 2-3 хут пуçтарăр.

Вĕлле хурчĕсене илĕртмешкĕн клевер, сарă пăрăç, укроп, ырă шăршă кăларакан культурăсене акма ан манăр.

Сиверен хӳтĕленмешкĕн пахчара улăм, турат куписем хатĕрлемелле. Çиелте курăк, торф е тислĕк пултăр. Çанталăк 2 градус таран сивĕтсен купана иртмелле.

Тепĕр меслет. Шăнтиччен çĕре шăвармалла, сивĕтсен йывăç-тĕме 2-3 хутчен çăл шывĕпе пĕрĕхмелле. Туратсем пăрланаççĕ, çапах çакă сивĕ сывлăш пек хăрушă мар.

Улмуççи е çырла йывăççисем çинче ытти çулхинчен чечек нумайрах-тăк – турат вĕçĕнчисене татăр. Кунашкал меслет пысăк тухăç илме май парĕ.

# Кĕлчечек ӳстеретпĕр

**Черченкĕ те ачаш çак чечек. Ăшша юрататъ.**

Кĕлчечек çинчи виткĕçе юр кайсанах илмелле, тĕмсен айĕнчи çĕре асăрханса кăпкалатмалла. Кайран туратсене касма та юрать. Çĕнĕ тĕмсене çуркунне те, кĕркунне те лартаççĕ. Пирĕн тăрăхшăн сивве чăтăмлă сортсем çеç юрăхлă.

Кĕлчечек усă, хĕвеллĕ вырăн юрататъ. Ытлашши нӳрĕ вырăнта кăмпа чирĕ пуçланас хăрушлăх пур.

Пĕрремĕш çулхине ӳсен-тăрана ытлашши апатлантармалла мар. Чи кирли – çĕре типме памалла мар. Çавна май пĕр сий пăчкă кĕрпи е компост хумалла. Вăл нӳрĕк тытса тăрать, çумкурăкран сыхлать.

Çуркунне кăмпа чирĕнчен профилактика тумалла, кĕлчечексене вĕлтĕрен тата пилеш курăкĕн /пижма/ шывĕпе сирпĕтмелле.

## ВЫЛЬĂХ-ЧĔРЛĔХ

# Уксус та пулăшать

**Выльăх-чĕрлĕх усракансемшĕн уксус дезинфекци тума, выльăха сипleme усăллă.**

Япăх апат çинĕрен вар-хырăмĕ пăсăлсан выльăха уксус хушнă шыв ĕçтермелле. Ерекен чир сарăлнă чухне те выльăх сывлăхне упрама пулăшĕ вăл. Пысăк температура чухне хăва шывĕ вĕретсе памалла. Унта темиçе тумлам уксус ямалла.

Уксуспах пыйтăпа ытти кăпшанка та хăратма пулать. Профилактика тĕлĕшĕпе ĕнене уйăхра икĕ хутчен 1 процентлă уксус шывĕпе душ кĕртме юрать. Анчах асăрханулла пулмалла: кусĕпе хăлхине ан лектĕр вăл.

Выльăхăн кĕсенленнĕ вырăнĕсене çакăн пек маçпа сĕрме пулать. 50 грамм дизель çăвĕ, 10 грамм кӳкĕрт, 20 миллилитр 30 процентлă уксус хутăштармалла.

## СЫВЛĂХ

# Шăмă сыппи ыратсан

**Шăмă сыпписем ыратсан тăтăшах вăйлă витĕмлĕ эмел ĕçме е укол тума кирлĕ мар. Тĕрлĕ компреспа, маçпа сиплени тепĕр чухне чылай витĕмлĕрех.**

1 апат кашăкĕ пыла 1 апат кашăкĕ вĕтĕ тăварпа пăтратмалла. Хутăша йĕтĕн е маmăк пусма çине сарса ыратакан вырăна хумалла, ăшă çыхмалла. Компреса ыратни иртиччен каçсерен куллен тумалла, ирхине çеç салтмалла.

3 апат кашăкĕ камфора çуне 1 апат кашăкĕ пылпа, 1 апат кашăкĕ сарă пăрăçпа хутăштармалла, купăста çулçи çине хурса ыратакан вырăна хумалла, ăшă çыхмалла, 2-4 сехет тытмалла.

Урана çыхнă вăхăтрах çак хутăша та ĕçмелле: 200 грамм ыхрана, 500 грамм шур çырлине аш арманĕ витĕр кăлармалла та 1 килограмм пыл хушмалла. Кунне виçĕ хутчен пĕрер чей кашăкĕ ĕçмелле.

# Каланхоэ

**Каланхоэ чечекĕпе халăх сиплевçисем çеç мар, официаллă медицинăра та усă кураççĕ. Унран пахалăхĕпе аптекăри эмелсенчен нимĕнпе те кая мар препаратсем килтех хатĕрлеме пулать. Хакĕ те "çыртмĕ".**



- 40 миллилитр каланхоэ сĕткенĕ, 0,25 грамм фуразолидон, 0,25 миллилитр 2 процентлă новокаин тата 100 грамм шывсăр ланолин илсе хутăштармалла, маç хатĕрлемелле. Унпа хăть те мĕнле сурана та сĕрме юрать. Вăл ыратнине хăвăртах лăплантарать.
- Настой хатĕрлеме çур литрлă банкăна каланхоэ çулçине тураса тултармалла, унтах 70 процентлă спирт ямалла та пĕр эрнелĕхе тĕттĕм вырăна лартмалла, хушăран пăтратмалла. Хатĕр настоя сăрăхтарса сивĕтмĕшре упрамалла. Варикозран, мастопатирен сиплеме, çăвар ăш-чикки пăсăлсан, пӳрленекен сурана сыватма усă кураççĕ.
- Чечек çулçине аш арманĕ витĕр кăлармалла, сĕткенне пăрмалла. Çулçа темиçе хуçлатнă марля çине хурса чĕркемелле те сиплемелли вырăна хумалла. Вăл шăл е ытти суран ыратнине лăплантарма, пӳрленекен инфекцие, ӳт кĕçĕтнине, юн юхнине иртterме пулăшать. Операци çĕввисене хăвăртрах ӳт илме те пулăшать теççĕ.
- Сĕткенĕ сурансене сиплеме паха. Вăл писĕнĕ-каснă вырăна тасатать те ӳте хăвăртрах пирчеме пулăшать. Сĕткенне чир алхаснă вăхăтра профилактика тума та усă курма юрать. Ăна сăмса кашни хăвăлне темиçе тумлам тумлатмалла.

# Сиплĕ чей



**Çанталăк йĕпе-сапа тăнă вăхăтра шăнса чирлесси те инçе мар. Çавăнпах ура йĕпенсен, сунаслама тытăнсан сиплĕ чей хатĕрлемелле.**

- 1 чей кашăкĕ лимон сĕткенĕ, 1/2 чей кашăкĕ теркăланă импĕрь, 1/4 чей кашăкĕ куркума, 1/2 апат кашăкĕ панулми уксусĕ, 1/2 чей кашăкĕ пыл, чĕптĕм корица, 300 миллилитр шыв кирлĕ.

Шыва вĕретмелле те импĕр ямалла. Уйрăм савăтра куркумана, корицăна тата пыла пăтратмалла, панулми уксусĕпе лимон сĕткенĕ хушмалла. Унтах вĕри шыв /вĕрекенни мар/ ямалла.

Импĕрпе корица – вируссемпе кĕрешекен, шыçăннине сиплекен çимĕçсем. Лимон сĕткенĕпе панулми уксусĕ С витамин çителĕксĕррине саплаштараççĕ, вĕри чей вара организма чирпе кĕрешме пулăшать.

- 1 лимон, импĕрь татăкĕ, çĕçĕ вĕçĕпе кайен пăрăçĕ, çĕçĕ вĕçĕпе куркума, пĕтнĕк курăкĕн темиçе çулçи, пыл, 150 миллилитр шыв кирлĕ.

Лимон сĕткенне кăлармалла, импĕре теркăламалла. Чей хатĕрлеме мĕнпур çимĕçе вĕри шыва ямалла.

Куркума ӳпкене йăлмакаран тасатать, çăварпа пыра дезинфекцилет. Пĕтнĕк курăкĕ ӳслĕке лăплантарать, сывлама çăмăллатать. Кайен пăрăçĕ кĕлеткене ăшăтать.

- 250 миллилитр ананас сĕткенне, 1/2 апат кашăкĕ панулми уксусне, çĕçĕ вĕçĕпе илнĕ кайен пăрăçне, 1 апат кашăкĕ пыла вĕрилентерме юрăхлă савăта ярса пăтратмалла та ĕçме пултарнă таран ăшăтмалла.

Ананас та шыçăннине ирттерет, сăмсари йăлмакана тухма пулăшать.





КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Атьăр манпа концерта...

**Арçын кăмăлне пĕлес килет-и? Пĕр-пĕр юрăçăн концертне каймашкăн билет туянма ыйтăр ăна. Укçине кăларса тыттарать-и? Е хыткукарланса тĕрлĕ сăлтав тупать-и? Тĕрĕслесе пăхар-ха...**

Çамрăк чухне пĕр ĕçтешĕм киле ăсатаканччĕ. Кафене чĕнмен. Мороженăй та, пироженăй та илсе çитермен вăл мана. Эх, ыйтма аванмарланнă. Хăй шухăшласа илеймен ĕнтĕ. Те качча илес тесех утнă вăл манпа юнашар? Ыталашман, чуп туман, юрату çинчен те калаçман. Хăш чухне, ун куçне курăнас мар тесе, транспорт чарăнăвĕ хыçĕпе тараттăм. Унпа иксĕмĕр пĕр шухăшлă пулаймарăмăр. Пирĕн çулсем уйрăлса кайрĕç. Çавăнтанпа тĕл пулман та, калаçман та хама килĕштернĕ çынпа.

Хайхи билет сутма пуçласан социаллă сетьре шыраса тупрăм ăна. «Ача пăхатăп. Каçсерен килтен тухаймастăп», – ăнлантарать мана. Пĕлĕшĕм мăшăр тупнăшăн, çемьере йыш хушăннăшăн хытă савăнтăм. Арăмĕ çĕрлечченех ĕçрен таврăнаймасть иккен. «Концерта каяс вырăнне ачана тутли илсе çитерĕп», – шарт та март хирĕçлет кил хуçи. Çулталăк çурăри тĕпренчĕке канфет та, шăккалат та кирлĕ мар. Сĕтпе тăпăрч, пăтă пĕçерме кĕрпе туянмалăх кĕсьере укçа пурах ĕнтĕ ашшĕн.

«Ача япалисем мĕнле хаклă...» – пĕр вĕçĕм мăкăртатать арçын. 10 ачаллисем мĕнле пурăнаççĕ-ши? «Çавнашкал пысăк йышлă çемьесем те пур-и халĕ?» – те чăнах тĕлĕнет вăл? Пур, паллах. Хаçатра та çыратпăр вĕсем пирки.

«Хĕрарăмсенчен пĕр канăç çук. Кевер çĕрĕ те, ылтăн вăчăра та, крокодил тирĕнчен çĕлетнĕ сумка та... кирлĕ сире», – хĕрсех кайрĕ пĕлĕшĕм. Ун пекех мар-ха та... Ку арçын юратнă хĕрарăмне хăçан та пулин чечек илсе парĕ-ши?

«Концерта мар, Тайланда каяс килет манăн санпа. Анчах путевка илме укçа сахалтарах...» – вăрах шухăшласан çырса ячĕ ясар арçын. Унпа та ĕç тухманни тӳрех паллă.

Хула çывăхĕнчи ялсенче те юлташ нумай. «Атя, концертра тĕл пулăпăр. Билетне таçта шыраса çӳремелле мар, хамах сутатăп», – терĕм. «Ытлашши укçа çук манăн. Кайран пӳрне ĕмсе лармалла-и?» – унта-кунта шăнкăравласа çакнашкал каланине те хăнăхса çитрĕм. Хулана килме çăмăл машина тупасси те хăратать хăшне-пĕрне. Эх, çителĕклĕ ĕçлесе илме те, лайăх канма та пĕлмесçĕ пирĕн арçынсем.

«Уй, каçхине выльăх пăхмалла, ĕне сумалла. Кайран килтен те тухас килмест», – тет диван çине выртса телевизор курма хăнăхнă арçын. Хĕрĕхрен те иртмен, халăх хушшине тухас килмест-ши? Чим, ĕнине хăех сăвать-ши тата? Тепрехинче ыйтса пĕлĕп. Халĕ каллех билет сĕнесрен хăраса телефон та тытмасть вăл.

«Ах, кайăттăм та концерта, анчах çав кун пушă мар. Юлташсемпе пĕрле футболла выляма калаçса татăлтăмăр. Тен, концерта урăх куна куçарма пулĕ?» – пăшăрхананçи тăвать пĕр предприниматель. Те шӳтлесшĕнччĕ вăл? Пĕлеймерĕм. Кĕсьери укçине хытă тытнине вара тӳрех ăнланса илтĕм.

«Концертра юрăçсемпе пĕрле юрлăпăр, ташлăпăр, чун каниччен калаçăпăр», – илĕртетĕп арçынсене. «Кирек кам чĕнсен те каймастăп. Çывăрма выртиччен кĕнеке вулани лайăхрах маншăн», – çапла калакан та тупăнчĕ. Тепри культура керменне арăмĕпе пĕрле каясшăн мар. Ăна юлташ тупса парас пулать.

«Мана тӳлевсĕрех билет пар-ха», – тени те пуçа вырнаçаймасть. Апла тăк концерта каймашкăн кăмăл пур вĕсен. Кăшт çаврăнăçуллăрах пулмалла вĕсен. Ямăтти вара пурне те илĕртет. Веçех илесшĕн, анчах каялла нимĕн те парасшăн мар.

Çапах хăйне, арăмне, хуняшшĕпе хунямăшне валли билет илекенсем тупăнчĕç. Вăт çакнашкал арçынсене хисеплеме, юратма юрать.

**Екатерина ЦВЕТКОВА.**

ВĂТ, ТĔНЧЕ!

# Ăçта çухалчĕ-ши арçын?

Чылайранпа паллакан арçын ĕç хыççăн мана кафене чĕнчĕ. Юлташ теме çав тери çывăх хутшăнса курман унпа. Кӳршĕ ялсем вăл, пирĕн шкулта вĕреннине те лайăх астăватăп. Ытла ют арçынах мар, хурăнташ темелле-ши, тĕрĕсрех каласан, инкен пиччĕшĕ пулать. Ĕçкĕ-çикĕре, уявсенче те куркаланă. Ахальтен чĕнменнине ăнлантăм-ха, манран укçа-тенкĕ сахал мар илнĕ вăл тахçан. Вăхăтра тавăрса панăран 10-20 пин тенкĕ таранах тыттарса яраканччĕ инкен тăванне. Нимĕн те систерсе каламанран ку çынна каллех пулăшу кирлĕ пулĕ тесе шухăшларăм. Ĕç хыççăн ниçта та васкамалла марччĕ, килте кĕтекен çук, унпа пĕрле кафене кайма хаваспах килĕшрĕм. Тĕрĕссипе, иртен пуçласа каçчен тĕпĕртетнĕрен чей ĕçме те вăхăт пулмарĕ çав кун.

Хырăм та хыр тăррине хăпарма ĕлкĕрнĕччĕ. Банкет пирки ĕçри столовăя хăвăртах хупрĕç, ирхине килтен апат илсе тухма манса кайнă. Çук, укçа ыйтăвĕ кăсăклантармарĕ ăна. Миша мĕн те пулин сĕнессе кĕтсе илеймерĕм, менюпа хам паллашма шухăшларăм. Кафере выçă ларма-и тата, вунçичĕ çулта мар-çке халь тин, ананасран хатĕрленĕ хамăн юратнă салата илтĕм, тĕтĕм çинче ăшаланă какай, персик сĕткенĕ тата шăккалат мороженăйĕ суйларăм. Миша килте çисе тухнăччĕ тесе хăйне валли лимон хушнă чей çеç саккас пачĕ. Ăнланмарăм, темшĕн кăмăлĕ тăруках улшăнчĕ хайхискерĕн. «Ку кафере ытла хаклă пек туйăнать, чей те 50 тенкĕ тăрать, çапла мар-и?» – терĕ хайхискер. Хирĕç нимĕн чĕнеймерĕм, аванмарланнипе çĕр тĕпне анса кайма хатĕрччĕ çак самантра. Пит хĕрелнипе вут пек пĕçерме тытăнчĕ. Халь тин тухса кайма та лайăх мар. «Эпĕ тухса туртам-ха», – терĕ кăштахран. «Пирус мăкăрлантармасăр пĕр сехет те чăтса ларма çук-ши?» – шухăшларăм ăшăмра. Самаях вăхăт иртрĕ, Миша çук та çук. Шăнкăравларăм – телефонĕ тытмасть. Арçын таçта çухалчĕ. Çур сехет те иртрĕ – килмерĕ. Хамăн апат-çимĕçшĕн тата унăн чейĕшĕн тӳлерĕм те – каферен тухса утрăм. Çывăхра та, чарăнура та курăнмарĕ вăл. Мишăн çумĕнче укçа-тенкĕ пулмарĕ-ши? Е ман салатпа какай ытла та хакла ларасран хăрарĕ-ши? Тĕрĕссипе, вăл çапла хăтланнăшăн хама намăс пулчĕ. Канмалли кунсенче те шăнкăравламарĕ арçын, каçару та ыйтмарĕ. Темĕн усалли сиксе тухманни паллă, инке пĕлĕччĕ. Çакнашкал тав турĕ мана арçын. Кафене мĕншĕн чĕннине те ăнланаймарăм. 300 тенкĕшĕн çука юлатчĕ-ши Миша? Мĕскĕн, чейне те ман шутран кăларчĕ. Инкен пиччĕшĕ каферен мĕншĕн тарни паянхи кун та пуçа вырнаçаймасть. Халĕ унăн кăмăлне лайăх пĕлетĕп. Текех кивçен те ыйтмĕ.

**ГАЛИНА.**
Шупашкар хули.

# Тунсăх тыткăнĕнче...

«Епле телейлĕ… – ытараймасăр, тен киленсе те, кашни сăнӳкерчĕке темиçе хутчен те çавăрттарнипе чейĕ те сивĕнсе кайрĕ каçхи сменăна юлнă медсестран. – Ан куçăхчăр кăна ĕнтĕ. Темиçе çул каяллахи пек тăварлă куççуль кăларакан самантсем ан пулччăр вĕсен…»

«Мĕнле-ха вĕсем, мана çуратнă аттепе анне, çапла калама пултарчĕç? Вĕсем хăйсем ашшĕ-амăшĕн телейĕ пирки маннă-ши? Качча кайса ĕлкĕрĕн теççĕ. Эпĕ Алюша юратни пирки каланине илтесшĕн те пулмарĕç. Ача вăййи тесе йышăнаççĕ ман туйăмсене. Эпĕ вара Алюшсăр пуçне никама та савас çуккине лайăх пĕлетĕп. Маншăн вăл – хĕвел те, сывлăш та…» – ĕсĕкле-ĕсĕклех калаçрĕ ун чухне Мила больницăра. Вăл чунран хурланнине туйса, анчах та ăна нимĕнпе те пулăшайманран медсестра чун-чĕри те хӳхлерĕ.

Тепĕр кунне Алюша чарсах сăмах пуçларĕ Любовь Павловна. «Милăна халĕ мĕн тери йывăррине Турă кăна пĕлет. Хыççăн çӳре те, анчах пĕччен ан хăвар. Эсĕ кăна ăна пулăшма пултаратăн. Тĕрĕссипе, халĕ эсĕ кăна кирлĕ Милăна», – татах каламалли пурччĕ унăн, анчах пит тăрăх тăварлă тумламсем чупма пуçларĕç – те çамрăксене шеллерĕ вăл, те хăйĕн пĕччен пурнăçне…

Больницăран тухсан Мила, унччен те хăйне сăпайлă тытаканскер, пушшех те чĕмсĕрленчĕ. Пач урăх çын тейĕн ăна. Сăнран та улшăнчĕ. Çамрăклăхĕпе илемне больницăрах хăварчĕ тейĕн. «Йăл кулмалла мар çуратса янă пуль ăна?» – тейĕ тепри ун çине пăхсан. 19 çулти пике самантрах вун-вун çул аслăрах çынна çаврăнчĕ. Унăн кăмăлне мĕнпе тупмаллине те пĕлмест Алюш – хăть мĕн каласан та илтмест Мила.

Çынран ютшăнма тытăннин сăлтавне пĕлменрен пĕрле вĕренекенсем: «Алюшĕ кĕвĕçет ĕнтĕ», – тесе пĕтĕмлетме васкарĕç. «Мĕн тупнă-ши çав каччăра? Каччă теме те çук вĕт ăна – Мила чухлĕ те ӳсеймен! – пăшăл пăтти пĕçермелли сăлтав тупăнчĕ те ушкăнра. – Хĕрсемпе йĕркеллĕ калаçма та пĕлмест».

Алюш кĕлеткипе лутрарах пулнишĕн амăшĕ те пăшăрханатчĕ. «Хăйне те хӳтĕлеймест пуль», – хĕрхенетчĕ ывăлне. Икĕ сыпăкри пичĕшĕсемпе туслă пулнишĕн хĕпĕртетчĕ вара – вĕсем кӳрентерме парас çук. Шкула кайиччченех Алюша та хăйсемпе пĕрле кĕрешӳ мелĕсен секцине илсе çӳреме тытăнчĕç. Шкултан вĕренсе тухнă тĕлелле вăтам пӳллĕ каччă хăйĕнчен самай маттуртараххисене çĕнтерме тытăнчĕ. Амăшĕ тинех лăпланнă пек пулчĕ. Çĕнтерӳшĕн тивĕçнĕ Хисеп хучĕсем мăнаçлăх туйăмĕ çуратрĕç амăшĕн чун-чĕринче. Апла пулин те куçĕнче шиклĕх вуланчĕ хĕрарăмăн.



Кун-çул малашлăхĕ амăшĕсенчен кăна килсен-и? Пĕр япăх çын та, хурлăхлă чун та пулмалла мар çĕр çинче. Анчах пурнăçăн хăйĕн йĕрки: пуласлăх çыншăн – пысăк вăрттăнлăх. Амăшĕ хăйĕн çуначĕ айĕнчи тĕпренчĕкĕсене кӳрентерме парас çук. Анчах çав çунат айĕнчен тухса хăйсен телейне шыракан ывăл-хĕре мĕнле йывăрлăхсем кĕтнине никам та пĕлмест.

Вăй тата ăсталăх тепĕр çын тапăннинчен хӳтĕленме пулăшĕ те-ха, чун-чĕрене хӳтĕлемелли хĕç-пăшал ăçта-ши вăл?

Алюш Милăн сăнӳкерчĕкне кăтартсан амăшĕн куçĕ каллех шывланчĕ. «Анне халь тата мĕн-ха?» – мăкăртатрĕ ывăлĕ çакна курсан. «Ку сана кӳрентерес çук», – терĕ те амăшĕ тĕпелелле утрĕ. «Мана кӳрентерме-и? Хам каматăр çапса антарăп ак, – шӳтлеме хăтланчĕ Алюш. – Анне, Милăна хăйне хӳтĕлемелле, мана унран мар». Йăл кулчĕ амăшĕн тути, ăшăлăхпа тулчĕ куçĕ – ывăлĕн чун-чĕринче чи черчен туйăмсем çуралаççĕ мар-и-ха?

Туя хатĕрленмеллине ăнланчĕ амăшĕ. Ырă кăмăллă Милăна йышăнмасăр тăрайăн-и вара? Çемçе чун-чĕреллĕ Алюша Милăн ашшĕ-амăшĕ те хапăл пулассăн туйăнатчĕ те çав…

Чăрт-чарт çурса тăкрĕ Елизавета Алексеевна хĕрĕ Алюшпа пĕрле ӳкнĕ сăнӳкерчĕке. Шкултан ылтăн медальпе тухнă пепкинчен хĕрлĕ диплом çеç кĕтекенскер хĕрне çутăлтарса ячĕ. «Юхха, ята ярса çӳретĕн. Сана вĕрентме тӳлемешкĕн выльăх тавраşне сутса янине те мантăн-им? Мĕн ачи? Хăв та ача кăна-ха».

Тытса çурма хатĕрччĕ хĕрне Елизавета Алексеевна. «Тунтикунах пыратпăр», – уççăнрах каларĕ юлашки сăмахĕсене вăл.

Икĕ каç самантлăха та куç хупмасăр иртерчĕ Мила. Хăйне амăшĕ хăратма анчах çапла каларĕ тесе лăплантарма тăрăшрĕ. Мила пĕчĕкрех чухне те урамра ытларах чупсан тетте е пылак çимĕç илсе памассипе хăрататчĕç. Урăх кун пекки пулмасса шантарнă хыççăн кăмăлĕсем çаврăнатчĕç аслисен. Анчах ку хутĕнче апла пулмарĕ.

Мила тунтикун университета чăн та çитеймерĕ. Тунтикун та, тепĕр эрнерен те… Тухтăрсем киле яма васкамарĕç хĕре. Наркоз хыççăн йывăррăн вăраначĕ Мила. Вырăн çинчен тăрасшăн пулчĕ те, ури лăнчăр кайрĕ, куçĕ хуралса килнипе ăшă батарейи çине çамкипе пырса тăрăнчĕ вăл.

Общежитие шап-шурă сăнпа таврăнчĕ Мила. Пуçне бинтпа чĕркенине курсан ыйту хыççăн ыйту çуралчĕ тусĕсен. Мила вара хуравлама васкамарĕ. «Ялта ĕççи вăхăтĕнче темĕн те сиксе тухма пултарать, кайран каласа парăн», – арапах хăпрĕç тантăшĕсем.

Юрать-ха, Алюш унран пачах юлмасть: вĕренме пĕрле каяççĕ, лекцисенчен те пĕрлех таврăнаççĕ. Шăппăн, хăш-пĕр чухне пачах сăмах чĕнмесĕр. Ялан пĕрле пулин те тунсăхлăн пăхать каччă хĕр çине.

Тунсăх арçын куçĕнче ĕмĕрлĕхех юлчĕ тейĕн… Нумай çул иртсен те çухалмарĕ вăл… Милăпа яланах пĕрле вĕсем, темиçе кунлăха та уйрăм пурăнса курман. Мĕншĕн çаплах кăшлать-ши тунсăх арçын чунне…

Çывăх тăванĕсен шăпăрланĕсемпе сăнланнă ӳкерчĕксенче вара Алюша паллаймăн та. «Сывлăш çĕленĕ» хыççăн чупакан шĕвĕрккесенчен те хаваслăрах курăнать вăл. Шăпăрлансемпе вылянă май янкăр сасси, хаваслă кулли таçтан илтĕнет çӳçĕ кăвакарма пуçланă Алюшăн. Пилĕкĕ аптăратнине пăхмасăрах иртĕнме хатĕр арçын вĕсемпе. Килĕнчи шăплăх тыткăнĕнчен тухса тарнăскере ачасен шăв-шавĕ темĕнле асамлă хум евĕр илĕртет. Сас параймасăрах чунĕ тухнă пепкин сассине шырать тейĕн çав хумра…

**Н. МАРИНОВА.**

(Малалли. Пуҫламăшĕ 5-12 номерсенче).

**СУХВИ.** Ҫук-ха, килеймерĕ курăнать...

**ПОЛИЦИ ĔҪЧЕНĔ.** Вăрманта ҫын виллине тупнă. Эпир вара Михаил Ефимов ҫухални ҫинчен илтрĕмĕр.

**СУХВИ.** Ой, пĕтрĕмĕр */макăрса ярать/.* Пĕтрĕмĕр-р!

**КĔҪТУК.** Эпĕ шалти ĕҫсен пайне шăнкăравларăм, тупăнĕ-ха, кулянма кирлех мар-тăр...

**ПОЛИЦИ ĔҪЧЕНĔ.** Вилнĕ ҫынни вăл – Куҫма, ăна часах яла илсе килеҫҫĕ те мĕн те пулин паллă пулать.

**КĔҪТУК.** Леш, хăрах куҫли. */Сухвие лăплантарать/.* Эпĕ те /*полици ĕҫченĕ ҫине хăюсăррăн пăхса/*Михали кукка вилнĕ пулĕ тенĕччĕ... ҫухалнă тенине илтрĕм те...

**СУХВИ.** Ай, хăратса пăрахрăр эсир мана, ват ҫынна... Ăҫта ҫӳрет-ши? Ларасчĕ килте лăпланса...

**ПОЛИЦИ ĔҪЧЕНĔ** */кайма пикенсе/.* Киле килсен ҫийĕнчех систерĕр, ял канашне пĕлтерĕр...

**СУХВИ.** Юрать, ара, юрать...

**КĔҪТУК.** */каярах юлать/.* Сухви инке, лаши вара... лашине тăварман та-ҫке.

**СУХВИ** */нимĕн те пулман пек/.* Лаши вăл пасăрах хăех килнĕччĕ те, эпĕ ăна алăк уҫса кĕртрĕм кăна...

**КĔҪТУК.** Кукка вара?

**СУХВИ.** Э-э, ҫӳрет пулĕ лавкка е ял тăрăх, шывра вилмен пулсан. Килет, киле-ет, хырăм выҫатех... Килти выльăх килех килет...

**КĔҪТУК** */хыттăн/.* Юрĕ-ха апла... Эпĕ... курман...

**ПОЛИЦИ ĔҪЧЕНĔ** */кĕсйинчен хутпа чĕркенĕ ҫĕҫĕ кăларать. Кĕҫтука/.* Ку ҫĕҫҫине ĕҫ-пуҫ вĕҫлениччен парса хăвармастăп, виллине илсе килсен Шупашкарти морга ăсатăпăр... Эсĕ, Константин Романов, эсĕ те, Сухви инке, ҫак кунсенче ниҫта та тухса ан кайăр... Килĕшмелле-и? */Сумкинчен журнал кăларать те алă пустарать. Тухса каять/.*

**КĔҪТУК** */кăштахран хыҫҫăн тухать, хăйпе хăй мăкăртатать/.* Мĕн тумалла халĕ манăн?.. Мĕн тумалла? Тухса тарма та юрамасть... Пурпĕрех тупаҫҫĕ, каллех хупаҫҫĕ... */Чăрсăррăн/.* Хоп! Укҫа пур... */Тухса чупать/.* Юлташ! Юлташ! Тăхтăрха...

**ПОЛИЦИ ĔҪЧЕНĔ.** Мĕн пулчĕ тата?

**КĔҪТУК.** Нимех те пулман. Анчах... пĕр шухăш пуҫа ватать... Кукка пулсан та... Вăл, ҫав Михали кукка, ăҫта ҫухалма пултарнă? Тата ма пытанать вăл ҫынсенчен, сирĕнтен?

**ПОЛИЦИ ĔҪЧЕНĔ.** А-а, Костя, ку шухăша хальлĕхе никамах та ан пĕлтер. Мана хама та шухăшлаттарать – ҫынна вĕлерекенĕ Михаил Ефимов мар-ши?

**КĔҪТУК.** Ăнкаратăп. Эп шарламăп-ха, никама та, а-а, сан шухăшупа килĕшмелле пек...

**ПОЛИЦИ ĔҪЧЕНĔ.** Ку тискер ĕҫ сутсăрмĕнсĕр вĕҫленмест. Асăрханарах пул, эсĕ те айккинчех тăрса юлаймастăн пулас ку ĕҫрен.

**КĔҪТУК.** Эпĕ... Эпĕ мĕн пирки тата?

**ПОЛИЦИ ĔҪЧЕНĔ.** Хальлĕхе уҫҫăн калама ҫук, яшсене шыва кĕме каймашкăн эсĕ хавхалантарнă-ҫке-ха...

**КĔҪТУК.** Эпĕ-ĕ... */Йĕрке хуралҫи каять. Кĕҫтук шухăша путса темĕнччен ларать. Унтан яшт! сиксе тăрать те/.* Хамăнах йĕрлесе тупас пулать... Ăҫта ҫухалнă ман кукка?.. Эпĕ айăплă мар. Ҫĕҫĕ! Ҫĕҫĕ айăплă, тĕрĕссипе – ҫĕҫĕ хуҫи!

*Михали пĕр эрне пек тĕп сакайĕнчех пытанса пурăнать, унтан, пĕррехинче, тĕп сакайĕнчен ухмаха ернĕ евĕр ахăлтатса кулни илтĕнет.*

Ха, кур-ха халь, мĕнле патвар каччă пулса тăнă! Юрать-ха, юрать. А-а, сан куҫ тĕлне пулмарĕҫ-и районтан килнĕ пакунлисем?

**КĔҪТУК.** Ҫыхланмастăп эпĕ ун пеккисемпе... Ҫук, курман...

**ТЕППИ.** Ку та тĕрĕс. */Уйрăлса утать/.*

**КĔҪТУК.** Ку тата мĕн шырать? Ларасчĕ килте...

*Сухви алăкран тухать.*

**СУХВИ.** Кĕҫтук, илтмерĕн-и-курмарăн-и Михалие, куккуна?

**КĔҪТУК.** Ҫухалнă теҫҫĕ ҫынсем, тĕрĕсех апла? Хăҫан та пулсан «авăтса» ярĕ-и-ха тен...

Ӳ*РМЕК Ваҫли*

# Сĕмсĕр

*Телеспектакль*

**СУХВИ.** Эй-ай-ай! Ухмахах ерчĕ пулмалла, ухмахах... Лаша витине куҫарас пулать... Унтан шăрши те тухмĕ, ахăлтатни те илтĕнмĕ.

**Ҫирĕм иккĕмĕш курăну**

*Кĕҫтук вăрман уҫланкине килсе тухать. Унталла-кунталла пăхкаласа малтанхи вырăна пырса тăрать. Тĕмескене тапса пăхать.*

**КĔҪТУК.** Мĕн валашки ку? Мĕн тума кирлĕ пулнă-ха вăл куккана? */Каллех тапать/.* Лаша шăварма-ши?.. Тĕлĕнмелле... Лаши хăех киле пынă пулать... Апла пулсан кукка вилмен... килĕнче е таҫта сывăхрах пытанса пурăнать, ать, шелмă!..

*Аякран ҫынсем калаҫса килни илтĕнет. Кĕҫтук хăвăрт сывăхри юман хыҫне пытанса тăрать. Полици икĕ ĕҫченĕ уҫланкăна тухать.*

**ПĔРИ** */асли/.* Пирĕн икĕ ыйту татса памалла. 1-мĕшĕ: Куҫмана хăш тĕлте чиксе пăрахнă тата мĕншĕн ҫĕҫҫине кăлармасăрах пăрахса хăварнă? 2-мĕшĕ: мĕншĕн вĕлермеллех пулнă? Тупсăмĕ мĕнре? Тата */иккĕшĕ пĕрле/* кам?

**1-МĔШĔ.** Пĕрремĕшне туллинех мар пулсан та эпир паянах тупса пĕлме пултаратпăр-ха.

**2-МĔШĔ.** Иккĕмĕшĕ йывăр: нимĕн те паллă мар...

**1-МĔШĔ.** Ҫапах та алла усмăпăр, тимлĕрех пулăпăр... ҫын вилли – йĕп мар...

**2-МĔШĔ.** Ҫапла... йĕри-тавралла ункăласа шырăпăр, кашни 10-15 утăмран... Пуҫлар... */Иккĕшĕ те икĕ еннелле уйрălса каяҫҫĕ. Кĕҫтука кураймаҫҫĕ/.*

**КĔҪТУК.** Паллă... Эп кунта пулман... Куҫма хăйне хăй чикĕнсе вилнĕ... е ăна кукка укҫа енчĕкĕшĕн чиксе вĕлернĕ...

**Ҫирĕм виҫҫĕмĕш курăну**

*Кĕҫтук Сухви килне пырать. Ҫул ҫинче Теппине тĕл пулать.*

**ТЕППИ.** Ăҫталла васкать ку ҫамрăк ҫын? Кам ачи пултăн эсĕ вара?

**КĔҪТУК.** Михали кукка ҫухалнă теҫҫĕ те... пĕлме васкатăп. Эпĕ – Костя Романов.

**ТЕППИ.** Шĕшлĕ пек кăначчĕ вĕт-ха эсĕ?

**СУХВИ.** Мĕн эс? Хăвăн тăванунтан куласшăн-и тата? Ак... шĕшлĕ! Ăҫтарахчĕха хурăн шăлки? */Шыранҫи тăвать/.*

**КĔҪТУК.** Тарас пулать кунтан, хальлĕхе... Ман ăна тупмаллах, пĕлмеллех... йĕп мар... */Катаран кăшкăрать/.* Сухви инке, эс мана ахалех хӳтеретĕн... Михали кукка Куҫмана вĕлернĕ теҫҫĕ ҫынсе-ем!

**СУХВИ.** Кил-ха кунтарах, катаран кăшкăрса ан тăр!

**КĔҪТУК.** Ҫавăнпа тарса-пытанса ҫӳрет пулĕ теҫҫĕ... Эпĕ ҫавна пĕлтерес шутпа килнĕччĕ сирĕн пата.

**СУХВИ.** Ак тамаша, Куҫмана вĕлерме пултарайман вăл, вăл... килтен те тухман... ун ури те хуҫăк...

**КĔҪТУК.** Эп ҫынсем калаҫнине кăна илтрĕм... Пĕлместĕп ĕнтĕ... Килте ҫук пулсан эпĕ кайрăм-ха... Клубра суд пулассине илтрĕм тата...

**СУХВИ.** Ҫук... ҫуках... Мĕн сучĕ тата?.. */Пĕр вырăнта хытса ларнă пек тăрать/.*

*Лаша вити чӳречинчен Михали пуҫĕ курăнать. Вăл тискерленсе кайнă.*

**МИХАЛИ** */хăрушла кулать/.* Ха-ха-ха-ха-ха! Ох-хо-хо-хо-о-о!

**СУХВИ** */хăй ăшĕнче/.* Ухмаха тухса кайрĕ пулмалла... Михали, ан кĕсен-ха эсĕ унта, ҫынсем илтĕҫ тата...

**МИХАЛИ.** Нумаях юлмарĕ ман, ха-ха-ха, илтчĕрех. Эпĕ никамран та хăраман халиччен! Хăрамастăп та...

**СУХВИ.** Хуленрех эсĕ унта...

**МИХАЛИ.** Ĕҫтер мана хаяррине! Суда каятăп! Уҫ алăка!..

**СУХВИ** */аллине сулать/.* Мĕн пуласси Турă аллинче! */Алăк патнелле утать/.* Михали, ухмахах тухатăн пулмалла эсĕ? Кала-ха уҫҫăн: мĕн унта, сан мăнуку Кĕҫтенкки, хĕре пусмăрланă тет-и?

**МИХАЛИ.** Ҫук, пĕлместĕп, илтмен, илтме те пултарайман лаша витинче...

**СУХВИ.** Ĕмĕр тăршшĕпех йăмса пурăнтăм... Ҫитет, чăтăм пĕтрĕ.

**МИХАЛИ** */чышкине сарай чӳречинчен кăларса/.* Ак ҫакăн тутине мантăн-и?!

**СУХВИ.** Тек хăрамастăп, уру та утаймасть, аллу та хавшак... ҫĕкленеймест...

*Михали ҫумрах тăракан ал туйине хыпашлать, анчах илеймест.*

**СУХВИ.** Сирĕн ратти ҫавнашкал, ратти, эсĕ ĕмĕр тăршшĕпех ҫын мулне хапсăнтăн, сан аҫуна та ҫын вĕлернĕшĕн каторгăна янă теҫҫĕ, мăнуку та таса хĕр чысне пăснă курăнать...

**МИХАЛИ.** Сухви, тыттар-ха ҫав туяна, ура ҫине пусам... Эп пĕр пус та ҫынăнне вăрламан...

**СУХВИ.** Хама ҫапма-и? Ҫук, тыттармастăпах... Ак, ме, лăплан */эрех стаканне чӳрече витĕр тыттарать, анчах Михали тытса ҫитерейменнипе стаканне ҫĕре ӳкерет, тутине шăлма пикенет/.*

**МИХАЛИ.** Э-эх, сапаланать пурнăҫ, эрех стаканĕ пекех сапаланать */пусĕпе стенана тӳнклеттерет/.* Ох-ха-ха-ха... ах-ха-ха-ха... Ҫухал, шуйттан карчăкки, куҫ умĕнчен! Ҫухал, эсремет, ҫухал-л! */Хăрушла/.* А-ха-ха! О-о-о-о-о!.. Таса-ал-л!.. Теппине качча тухайманшăн тулхăран-ха эс!..

**СУХВИ.** Эс мана улталаса ĕне сума чĕнтĕн те... суса та пĕтерейменĕм, вăйпа мăшкăлларăн... ăна та суятăп-и? Ҫите-е-т! Ҫите-е-т! Мĕн чăтмаллине чăтрăм ĕнтĕ... Туй кунĕнченех...

**МИХАЛИ.** Сахал аштартăм ун чухне сана юр тăрăх, саха-ал... Эп качча илсе килмен тĕк кампа пулаттăнччĕ-ха тата?

**СУХВИ.** Эс мăшкăлланине мĕн виличченех манас ҫук эпĕ... Ара-а, кам хăйĕн пулас арăмне ҫуна турти ҫумне кăкарса юр тăрăх аштарать? Эй-й, калама та сăмах ҫитмест... Турă курать пулĕ анчах...

**МИХАЛИ.** Хĕрарăм вăл нушана чăтать, мăнтăра чăтаймасть теҫҫĕ ваттисем... Мĕн, тĕрĕс мар-и?

**СУХВИ.** Чăтрăм ĕнтĕ, мĕн чăтмаллине чăтрăм, курмаллине те куртăм, ҫавăн хыҫҫăн ачасăр тăрса юлтăмăр вĕт-ха. Эй, Турă, пурăнасси те нумаях юлмарĕ пулĕ те, мĕн курмалли юлчĕ-ши тата?

**МИХАЛИ.** Хĕрарăма ирĕке ярсан вăл арҫын ĕнси ҫинех хăпарса ларать. Сухви, чарăн-н! Эпĕ пĕр пус ҫумне тепĕр пус хушса пуйма тăрăшрăм, вăрламан эп нимĕн те...

**СУХВИ.** Колхоз ампарĕн урайне те эсĕ шăтармарăн-и?.. Миххисене иккĕн пĕрле ҫĕклемерĕмĕр-и? Мантăн-и?

**МИХАЛИ.** Ы-ых, сана-а! Уҫ вите алăкне-е! Суда каятăп!

**СУХВИ** */алăка питĕрнĕ ҫăраҫҫине илет те кĕтес хыҫне пытанать/.* Теппие эпĕ ӳкĕтлемен пулсан... кам патне лекеттĕнччĕ эсĕ? Э-э!

**МИХАЛИ** */туйипе хăмсарать/.* Хуп ҫăварна-а! Шăлна сырт! Ха, иртĕхсе кайрĕ, ха-а-а! */Туйине Сухви еннелле перет, хăй сулăнса кайнипе ҫĕре лаплатса ӳкет/.*

**СУХВИ.** Ҫитет сана. Михали, манпа харкашмасăр пĕр минут та иртмест сан. Тислĕк кăлармаллаччĕ витерен, хам вăй ҫитерейместĕп, судне кайма ĕлкĕрĕнха... */Михали вите алăкне тĕртсе уҫать/.* Наҫтука чĕнмелле марччĕ-ши, паян канмалли кунччĕ вĕт-ха.

(Малалли пулать).

## САВĂ СĔВЕМĔ

*Нина ПĂРЧĂКАН*

### Тăван кил кĕтет

Хĕвел анчĕ те пытанчĕ,
Уйăх ҫутрĕ хунарне.
Кĕмĕл ҫутă сапаланчĕ,
Кĕрхи касшăн ку – парне.

Сад пахчи ăш пиллĕ кил пек,
Уҫă лăпкăлăх кунта.
Туслашать манпа шух ҫил те,
Ачашлать мана чунтан.

«Ҫак асамлăх ан ҫухалтăр, –
Пăшăлтатрĕ акă ҫил. –
Сан ҫулна ялан ҫутаттăр,
Тăван кил кĕтет, эс кил».

### Ҫăлтăрăм сӳнмен

Эх, ҫăлтăрăм, ҫунсам-ҫунсам,
Эс пурăнма хăват парсам.
Ҫут пурнăҫ талисманĕ ман,
Сан ҫуттуна та эп манман.

Эс – иртнĕ пурнăҫăн шевли,
Чунри хăват, чи илемли.
Ҫĕн вăй кĕртсе мала туртан.
Утатăп эп хăват пуртан.

Асамлă ҫутă йăл ҫиҫет,
Пĕр чун-чĕре кăна пĕлет.
Пĕрле пулма Турри пӳрмен,
Ҫак ҫăлтăр халĕ те сӳнмен.

### Асамлăхпа

Асамлăхпа кĕтетĕн эсĕ,
Ҫуралнă ял, тăван кĕтесĕм.
Сана эп юрататăп питĕ,
Улăштармастăп нимĕнпе те.

Йăмра тăрри куккук сассиллĕ,
Ҫурхи садсем епле илемлĕ.
Тăван пекех мана кĕтеҫҫĕ
Пилеш, сирень,
ҫăка ак – виҫҫĕн.

Ҫак илеме мĕнле-ха манăн,
Ҫырми, кӳлли, урамĕ манăн.
Вăй паракан тăван кĕтесĕм,
Асамлăхпа ялан кĕт эс.

## ЭСИР ЫЙТНĂ ЮРĂ

### Пурнăҫ юрри

*Елена ИОВЛЕВА репертуарĕнчен*

Атăл та хумханчĕ пуль,
Тинĕс те хумханчĕ пуль.
Икĕ хум пĕрле пулса
Карапа путарчĕҫ пуль.

Анне те ылханчĕ пуль,
Атте те ылханчĕ пуль.
Ик ылхан пĕрле пулса
Телее ҫухатрĕҫ пуль.

Атте ма васкарăн пуль,
Анне ма ҫуратрăн пуль.
Тухса ӳкнĕ-ӳкменех
Вилтĕрех ку терĕр пуль.

Чиркĕве каймарăн пуль,
Турринчен ыйтмарăр пуль.
Ҫакă хĕр телейĕшĕн
Кĕлтума пĕлмерĕр пуль.

Анне ҫамрăк пултăн пуль,
Ăнлансах ҫитмерĕн пуль.
Пӳрт тулли ача пулсан
Телей пулать терĕн пуль.

Аслати авăтрĕ пуль,
Ҫиҫĕмĕ те ҫиҫрĕ пуль.
Аҫа ҫапса ҫунтарса
Писме те памарĕҫ пуль.





БОМОНД

# Регина ЗБАРСКАЯ – Хěрлě королева

**Ун пирки “совет Софи Лоренě” тата “Кремлěн чи хитре хěç-пăшалě” тенě. Регина Збарская модель пěтěм тěнчене ěнентерме пултарнă – Совет Союзěнче те мода пур, совет хěрарăмěсем те, кăмăлěсем пулсан, паллах, хитре те илěртӳллě курăнма, чаплă тăхăнма пултараççě. Анчах та юратуран курайманлăх таран чăнласах пěр утăм кăна иккенне Збарская хăй туйса курнă: пуç çаврăнмалла чапран пуçласа пурте манса кайни таран – кěске çул кăна. Збарская подиум королеви те пулса курнă. Çав вăхăтрах Збарская никам та паллама та тăрăшман хěрарăм рольне те ас тивнě. Юлашки роле чăтайман Регина чунě. Кам та пулин чăтма пултарěччě-ши вара çавăн пеккине?**

## Пуçламăшě

Кашни çăлтăрăн – хăйěн çулě. Паян çакă пиарăн классика жанрě. Регина Збарская вара çакна çамрăклах ăнланса илнě. Пулас çăлтăр ăçта çурални халě те тěптěрěс паллă мар. Пěрисем каланă тăрăх, вăл Вологдăра, отставкăна тухнă офицер çемйинче çуралнă /”Красная королева” фильма ӳкерекенсем çак версие никěсе хывнă/. Теприсем Регина Ленинградра, цирк гимнасчěсен çемйинче çуралнине çирěплетеççě. Регина хăй иккěмěш варианта килěштерни паллă. Хěр хăй çирěплетнě тăрăх, унăн ашшě-амăшě шăпах хăрушă трюк пурнăçланă чухне вилнě.

## Анăç сăн-пичěшěн

1953 çулта 17-ри хěр Мускава парăнтарма килнě. Вăл ВГИК экономика факультетне вěренме кěнě, çав вăхăтрах Модельсен çуртěнче ěçлеме пуçланă. Унăн пěрремěш наставникě çав вăхăтра чапа тухма ěлкěрнě художница-модельер Вера Аралова пулнă. Ку Çуртра Регинăна питě ăшшăн кěтсе илнине палăртма çук, унтан та ытла, ěçтешěсем ăна сивленě те: “анăç сăн-пичěшěн”, идеал патне те пырайман уришěн. Модельсен хушшинче конкуренци яланах питě вăйлă пулни паллă-ха. Анчах та Совет Союзěнче 50-мěш çулсенче манекенщица профессийě хисеплисен шутěнче пулман, çавăнпа та Колесникова, Регинăн хěр чухнехи хушамачě ку, кăмăлěн çирěплěхěнчен тěлěнмелли кăна юлать.

## “Илемлě хěç-пăшал”

1961 çулта Колесникова Аралова коллекцийěпе Парижра паллаштарнă. Регинăна унта часах асăрханă – совет моделě хăйне тыткалама пěлнипе кăна мар, ыттисемпе вěсен чěлхипе – акăлчанла, французла – хутшăнма пултарнипе палăрнă. Европа вырăс хěрне килěштерсе пăрахнă. СССР чиперукě Пьер Кардена, Федерико Феллиние тыткăнланă, шăпах француз журналистсем тăрăшнипе Колесникова çумне çыпăçнă та çак ятсем: “Кремлěн чи илемлě хěç-пăшалě” тата “совет Софи Лоренě”.



● ХĔРАРĂМ КУÇĔНЧИ ТУНСĂХА ÇАМРĂК ВЯЧЕСЛАВ ЗАЙЦЕВ СИРЕЙМЕН.



● ЗБАРСКИЙ.

“Манекенщицăсем пурте хитреччě, анчах та Регина вěсен хушшинче хăйне тытма пěлнипе палăрса тăратчě. Кěлеткин çитменлěхне те – урине – çавна пула никам та асăрхамастчě”, – çырнă каярахпа çав вăхăт çинчен Евгения Солодовникова.

Çак шухăшах Вячеслав Зайцев та палăртать. “Паянхи манекенщицăсен, пурин те тенě пекех, сăн-пичě асра пачах та юлмасть, – 15 çул каяллах çапла каланă вăл “Огонек” журнала панă интервьюра. – Ун чухне вара чăнласах “характерсем” тухатчěç подиум çине: Регина Збарская, Румия, Мила Романовская, Августа Вихрова. Пěр-пěринчен пачах уйрăлса тăратчěç вěсем. Вăл вăхăтра çак профессие хăюллисем кăна суйлама пултарнă. Чăн та, питě чаплă курăнатчěç вěсем. Регина Збанацкая илемлě кăна мар, питě ăслăччě тата”.

## Ăнăçупа пěрлех – юрату

Регина пурнăçне ăнăçупа пěрле юрату та килсе кěнě – вăл Мускав художникне Феликс-Лев Збарские юратса пăрахнă. Арçын Регинăна хăйěн музи тенě, яланах тенě пек авалхи Рим турри пек ӳкернě. Модель вара килти хăтлăхпа ăшăлăх, ачасем пирки ěмěтленнě. Кěçех арçынпа хěрарăм саккунлă майпах хут уйăрттарса пěрле пурăнма пуçланă. Темиçе çул çак çемьере чашăк-тирěк пачах та шăкăртатман темелле. Йăлтах пěр самантрах улшăннă. Сăлтавě Регинăн çие юлнипе çыхăннă.

## Инçех те марччě-çке телей...

Збарские ача кирлě пулман. Арăмне вăл ультиматум лартнă. Хěрарăм чăтса çитереймен. Регина больницăна кайса хырăм пăрахнă. Анчах та ку инкек пуçламăшě кăна пулнăха. Регинăн нерв тытăмě хавшаса çитнě. Вăл каллех больницăна лекнě. Чун ыратăвне, айăпне вăл антидепрессантсемпе ирттерме тăрăшнă. Инçех те мар пек туйăннă-çке телей – йěркеллě çемье çавăрма ăнтăлнă хěрарăм...

Ура çине тепěр хут тăма çапах та вăй çитернех Збарская, хăй чăнласах подиум королеви пулнине пурне те тепěр хут ěнентерме пултарнă вăл. Регина вăтăр çула çитнě ěнтě. Шăп çак тапхăрта Збарсая çамрăк Вячеслав Зайцевпа çыхăнса ěçлеме пуçланă. Çав вăхăтри фотосессисенче Регина – хитре хěрарăм, тунсăхлă куçлăскер. Куçěнчи тунсăхě тата ăна уйрăмах килěшнě.

## Инкек... черечě

Инкексен черечě ăна кěтсех тăнă тейěн. 1967 çулта Татьяна Осмеркина хěрлě буклерен çи-пуç хатěрленě. Вăл Совет Союзěн визит карточкипех танлашнă. Искусствоведсем ку кěпене “Раççей” тесех ят панă. Регина Збарская кăна мар, пěтěм общественноç çак кěпене Европăна шăпах вăл – Хěрлě королева – кăтартасса кěтсе тăнă. Анчах... çак чыса Регинăн тěп конкурентки Мила Романовская тивěçнě.



● РЕГИНА.

Лев Збарские вара арăмě ăна пула хырăм пăрахни те тытса чарайман. Вăл Марианна Вертинскаяпа юрату çавăрттарма пуçланă, хыççăнах Людмила Максакова хыççăн йăкăртатнă. Каярахпа Регинăран официаллă майпах уйрăлса Максакова патне тухса кайнă. Анчах кунпа та лăпланман-ха арçын, ăна пула Регина валли шăпа инкек хатěрлесех тăнă. 70-мěш çулсен пуçламăшěнче художник Израиле тухса кайнă. Унăн экс-мăшăрěсемшěн вара асаплă кунсем пуçланнă, вěсене хăрушсăрлăх органěсене чěнтере-чěнтере, допрос туса халтан янă.

## Çăлавçă палач

Збарскаян каллех сывлăхě хавшанă. Çак вăхăтра ăна Югославирен хитре сăн-питлě журналистпа туслашни çăлса хăварассăн туйăннă. Пěр вăхăт хěрарăма чăнах та вăй кěнě пек пулнă. Анчах та ку вăхăтлăх кăна-мěн – çăлавçă... палача çаврăннă. Регина экс-савнийě кěçех кěнеке кăларнă, “Сто ночей с Региной Збарской” ятлăскерте хěрарăмпа иккěшěн хушшинче мěн пулса иртнине сăрăсене çăратсах йăлт çырса кăтартнă. Ку та çителěксěр туйăннă курăнать, Регина “ěçтешěсем пирки кирлě çěре пěлтерсе тăрать” тесе хушса хунă çавăнтах.

Хěрарăма каллех КГБ офицерěсем сěтěрме пуçланă, каллех – допроссем... Хěрарăм хăйне япăх туйни те чарайман вěсене. Регина текех чăтса çитереймен, хăй çине алă хума тăнă. Анчах та ку хутěнче ăна çăлса ěлкěрнě. Пурăнас кăмăлě пěтнě хěрарăм тěллевне пурнăçламах ăнтăлнă, анчах иккěмěш хутěнче те – ăнăçсăр.

## Урай çăвакан çăлтăр

70-мěш çулсен вěçěнче ывăнса çитнě, сӳнме пуçланă Збарская Модельсен çуртне таврăннă. Зайцев, ăна асрах тытса тăраканскер, пулăшма тěв тунă, ěçе вырнаçтарнă. “Унăн шăпи тěлěнмелле инкеклě çаврăнса тухнă. Çапах та эпě ăна пултарулăхěшěн яланах хисеплеттěм”, – аса илнě каярахпа модельер.

Анчах та модель текех подиум çине тухман ěнтě. Мода кăтартнă хыççăн вăл урай çунă – Збарскаяна тирпейлӳçě пулма кăна йышăннă.

## Вěçě

Тата нумай вăхăт тытăнса тăнă-ха хěрарăм. Анчах та кирек мěнле чăтăмлăхăн та вěçě пур. 1987 çулта “совет Софи Лоренě” хăй палăртнине пурнăçа кěртнех. Тěлěнмелле те, çут тěнчерен кайни пирки те, килни пекех, тěрлě верси пур. Пěрисем Збарская психиатри клиникинче вилнине калаççě. Теприсем вăл антидепрессант нумай ěçсе пурнăçпа сывпуллашнине палăртаççě. Виççěмěш верси те пур – Регина хăйěн вилěмěпе вилмен...

СССР чи паллă моделěсенчен пěрин Регина Збарскаян вил тăпри ăçти те паллă мар. Чи анлă сарăлнă верси тăрăх, унăн ӳтне çунтарнă. Анчах та кěлетке юлашкине пырса ыйтакан тупăнман...

КĂСĂКЛĂ

## Куçлăха пула

Австрали ăсчахěсем çакăн пек пěтěмлетӳ тунă: арçынсен тěксěм куçлăха 2-3 сехетрен ытла тăхăнса çӳреме юрамасть иккен. Куç сетчаткине хěвел çути мěн чухлě сахалрах лекет, арçын организмěнче мелатонин ытларах пухăнать. Унăн виçи ытлашши пулсан вара арлăх функцийě вăйсăрланма пултарать.

* * *

● Çěр çинче шута илнě IQ чи пысăк шайě икě хěрарăмăн пулнă.

● Пысăк хуласенче пурăнакансем хăйсен пурнăçěн 6 уйăхне... светофор симěс çутине кěтсе ирттереççě.

● Американсен 55 проценчě кăна Хěвел çăлтăр шутланнине пěлет.

● Китайра акăлчанла Америкăринчен те ытларах калаçаççě.

● Çулталăкра 250 пин американа арăмěсем хěнеççě.

● 2000 çул тěлне Совет Союзěн йышне кěнě патшалăхсенче шалу шайě çапла пулнă: Раççей – 73 доллар, Украина – 39, Беларуç – 67, Узбекистан – 49, Азербайджан – 49, Армени – 37, Молдова – 33, Кăркăсстан – 22, Таджикистан – 8,9.

– Пĕр хутчен кăна качча тухакан – кахал хĕрарăм, – çапла калама юрататъ манăн кӳршĕ Сонечка.

* * *

Ултăри хĕр пĕрчинчен ашшĕ-амăшĕ ыйтать:

– Сана кам кирлĕ: йăмăк-и е шăллу-и?

– Никам та кирлĕ мар, – хуравлать хĕр пĕрчи. – Халĕ хамшăн та пурăнса курман-ха...

* * *

Çурçĕр иртни виçĕ сехет. Телефон шăнкăртатнипе вăранатăп. Тарăха-тарăхах ăна алла илетĕп. Унта вара хĕрĕм пăшăлтатни илтĕнет:

– Атте, шыв илсе кил-ха... Хам тăраймастăп – кушак ура вĕçĕнчех çывăрать те ăна вăратас килмест...

* * *

Амăшĕ ултт ăри ывăлне хăтăрать:

– Çĕнĕ шăлавар тăхăнтартса кăларса ятăм сана урама. Эсĕ вара каллех кӳлленчĕке кĕрсе ӳкнĕ!

– Каçар, анне, эпĕ питĕ хăвăрт кĕрсе ӳкрĕм – шăлавара хывса та ĕлкĕреймерĕм...

* * *

Арçынсен пурнăçĕ – йăрăм-йăрăм: е сарă хĕр, е хури. Хĕрарăмсен пурнăçĕ зоопарка аса илтерет – е качака таки, е ашак, е така...

* * *

– Чунăм, эсĕ мана пĕррехинче пулла каятăп тесе хăварнăччĕ, ас тăватăн-и?

– Çапла. Вара мĕн?

– Санăн çăрттану шăнкăравларĕ, вăлча сапма хатĕрленет...

* * *

Бюджет тытăмĕнче ĕçлекен кĕлĕ тунинчен.

Хисеплĕ укçа! Сана яланлăхах пурăнма манăн енчĕке чĕнетĕп. Вăл питĕ хăтлă тата пысăк – сана килĕшмеллех. Хăвăнпа пĕрле Америкăри тата Европăри шăллупа йăмăкна та илсе килме пултаратăн – манăн енчĕкре пурин валли те вырăн çитет!

* * *

– Арăмпа тĕл пулнă ташă касĕ нихăçан та асран тухас çук!

– Мĕн, питĕ романтикăллă иртрĕ-им?

– Çук, хама питĕ лайăх мар туйрăм – эпĕ арăм килте, ачасемпе тесе шухăшланă вĕт...

* * *

– Эпĕ сана çак шăматкун ресторана чĕнесшĕн.

– Хаваспах пырăттăм та... Анчах та ку шăматкун пушах мар çав эпĕ – качча тухатăп...

– Çапла-и? Апла тăк, тен, эрнекун тĕл пулăпăр?

* * *

Çĕрле. Харлаттарса çывăракан упăшкине арăмĕ пĕр кĕтмен çĕртен силле-силле вăратать.

– А? Мĕн пулнă? Мĕн сиксе тухнă?

– Нимĕн те пулман-ха. Эпĕ çакна кăна ăнланаймастăп – çавăн пек пĕчĕк шалу илнĕ чухне мĕнле чунпа лăпкăн çывăрма пултаратăн эсĕ?!

* * *

Больницăн травматологи уйрăмĕнче:

– Туртма юрамасть. Туртнине курсан костыльсене пуçтарса илетпĕр те сиплев мĕн вĕçлениччченех таварса памастпăр.

* * *

Амăшĕпе ывăлĕ урампа пыраççĕ.

– Анне, атя ак çак аппана туянатпăр, – тет ывăлĕ.

– Мĕн эсĕ, ывăлăм, – хирĕçлет хĕрарăм. – Аппана туянма пулать-и вара?

– Пĕлместĕп, аттепе чухне эпир ăна яланах туянатпăр, – тет арçын ача.

* * *

– Çав этем тенисем ăслах мар çав... – тет пĕр шăна терине. – Мĕн тери хаклă маччaсем тутараççĕ те хăйсем унпа усă та курмаççĕ.

* * *

– Анне, эсĕ мана юрататăн-и?

– Паллах, ывăлăм.

– Апла тăк ав çав пиччене, мороженăй сутаканнине, качча тух.

* * *

– Чиперукăм, санăн мĕнле те пулин фантази пур-и? – ыйтать упăшки арăмĕнчен.

– Паллах.

– Каласа кăтарт.

– Тинĕс хĕрринче, пальмăсен айĕнче савăшатăп, ют курăксен шăрши пуçа çавăрать...

– Эпĕ вара ăçта?

– Эсĕ киле юлнă...

Çамрăк упăшка арăмĕ валли шăпăр туяннă. Лешĕ хайхине çавăра-çавăра пăхкалать те:

– Инструкцийĕ ăçта? – тет.

* * *

Пирĕн ĕçре медосмотр тухмалли пирки хушу кăларчĕç: чи кирли – наркологран тата психиатртан илнĕ справка. Тинех пуçлăхсем те ăнланса илчĕç курăнать – урă тата йĕркеллĕ психикăллă çын çак шалупа ĕçлес çук...

* * *

– Арçынсем манпа тĕлпулăва мĕншĕн ялан сухалĕсене хырмасăр килеççĕ?

– Эсĕ тĕлпулăва хăçан та пулин вăхăтра çитсе курнă-и?

* * *

– Анне-е-е-е!!! Манăн кравать айĕнче Бабайкаа-а-а!!!

– Лăплан, ывăлăм, аçу командировкăран тавраниччен ку Бабайка пирĕнпе пурăнĕ.

* * *

– Вовочка, эсĕ хăçан та пулин тӳрлететĕн-и «иккĕ» паллусене?

– Атте, манăн вĕсене епле тӳрлетес-ха? Журнал вĕрентекенсен пӳлĕмĕнче упранать вĕт?

☺И-ХИ-ХИК☺



## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### СУТАТĂП / ПРОДАЮ

**2.АКЦИЯ! БЛОКИ** КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ, пропаренные, вибропрессованные 20х20х40 – 31 руб., 12х20х40 – 26 руб., 9х20х40 – 22 руб. Высокое качество. **Песок,** ОПГС. Доставка манипулятором. Без вых. **Т. 8-967-470-46-77.**

**3.АКЦИЯ! КОЛЬЦА** ж/б для колодцев и канализаций 0,7; 1; 1,5м. Бурение. Д-ка манипул-м. **Работаем** без выходных. **Т. 8-967-470-46-77.**

**4.Немецкие пластиковые ОКНА.** Скидки. Гарантия. Замер, д-ка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.БЛОКИ керамзитобетонные** пустотелые 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40; полнотелые 20х20х40 – заводские; **ЦЕМЕНТ** – недорого. Кассовый чек. Доставка. Разгрузка. Т. 8-960-301-63-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Срубы на заказ.** Т. 37-28-74.

**14.Немецкие ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер, доставка – бесплатно. Без вых. **Т. 8-927-855-83-55.**

**15.Кирпич** любой, керамблоки, **кольца. Бурение.** Т. 89613393363.

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**22.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – около 100 видов, **СЕТКУ СВАРНУЮ,** кладочную, штукатурную; проволоку, столбы. Доставка. Т.: 68-30-45, 89379522211.

**24.Грабли,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники,** опрыскиватели, **погрузчики,** БДФ. Низкие цены. Д-ка. Т. 89278533596.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **колодезные кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**27.КИРПИЧ** рядовой, облицовочный, **блоки керамзитобетонные.** Доставка. Т.8-903-322-02-08.

**61.ЗАБОРЫ** и т.д. Т. 89877372939.

**104.ТЕПЛИЦЫ по низким ценам.** Доставка. Сборка. Т. 48-16-54.

**129.ТЕПЛИЦЫ из поликарбоната.** Д-ка. Скидки. Т. 89276676202.

**142.Окна – дёшево.** Т. 89276684382.

**165.Бетон, ОПГС, песок.** Доставка. Скидки. Т. 8-967-790-61-16.

**172.Теплицы оцинкованные** от производителя. **Доставка.** Сборка. Т. 89876693419.

**203.Песок, щебень, гравмассу.** Доставка. Скидки. Т. 8-987-667-97-56.

**212.Бетон,** песок, **гравмассу,** кирпич, **доски.** Т. 89603063254.

**214.Керамблоки** /40х20х20, 40х12х20, 40х9х20/ пропаренные, вибропрессованные – **недорого.. Доставка.** Т. 89176776846.

**221.Бычков** /от 3-х недель/ **по 8000** руб. Доставка. Т.: 8-903-359-79-62, 89196690171.

**222.Вĕлле хурчĕ.** Т. 89373702829.

**223.ОКНА, теплицы,** обшивка домов. **Двери** стальные. Гарантия 15 л. Скидки 40%. Т. 89196624097.

### ТУЯНАТĂП / КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-962-599-47-06.

**28.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

**39.Бычков, коров, лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**147.Тёлок, коров, бычков, лошадей.** Т. 8-903-389-85-72.

**148.Бычков, тёлок, коров, лошадей.** Т. 8-905-197-50-04.

**149.Коров, лошадей, бычков, тёлок.** Т. 8-903-066-46-41.

### ПУЛĂШУ / УСЛУГИ

**38.Чистка колодцев, скважин. Навесы.** Т. 8-967-471-50-70.

**43.Бурение скважин** "под ключ". Гарантия. **Т. 8-927-668-43-82.**

**51.Бурение колодцев,** скважин, **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Тел.: 89278477143, 89373790080.

**77.Натяжные ПОТОЛКИ за 1 день.** Т. 8-937-397-24-42.

**87.**Савăнăçлă **ТАМАДА,** видео, чăваш ташши-юрри. Т. 89373935779.

**125.Бурение скважин на воду.** Тел. 8-906-381-60-37.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 8-960-302-12-93.

**159.Утепление домов пеноизолом.** Гарантия. Скидки. Т. 380373.

**164.Кивелнĕ электропроводка** – пушар хăрушлăхĕ. **Специалистсем улăштараççĕ.** Т. 89370153540.

**201.**Пластиковые **ОКНА,** металлические **ДВЕРИ,** натяжные **потолки. Т.89276672088.**

**206.Кухни** с изюминкой, **спальни** с перчиком. Цвета в ассортименте. **Внимание!** Старую мебель примем в счет предоплаты. Выезд в районы. Т. 8-903-345-68-65.

**213.Бурение скважин на воду.** Т.: 8-962-321-17-80, 21-17–80.

### ПАЛЛАШУ КĔТЕСĔ

22-33 çулхи хĕрпе паллашатăп. Т. 8-925-822-93-63.


# Сăмах каçмăш

**Николай КРАСНОВ /Йĕпреç районĕ/ хатĕрленĕ**



**СЫЛТĂМАЛЛА:** 1. Çăка çулçи..., мĕн каласа çырнăши? /фольк./. 3. Завода кĕмелли документ. 7. Пермь облаçĕнчи «тăвар» хули. 10. Чӳрече пайĕ. 13. Африка çынни. 14. Çапă, шанкă, хăрăк-марăк. 15. Бук евĕрлĕ мăйăр йывăççи. 16. Вăрттăн сăмах, цифра. 20. Типĕтнĕ чухне утта тавăрни. 21. Вăл шакла пуçа кирлĕ мар. 22. Канфет сорчĕ. 25. Пăравус шухăшласа кăларнă çын. 26. Нимĕçсен пĕчĕк автомашини. 37. Офицерăн картăсем хумалли сумки.

**АЯЛАЛЛА:** 1. Тепĕр чухне вăл чăххине те вĕрентме пултарать. 2. Ростов облаçĕнчи порт хула. 4. Колчакăн Çĕпĕрти тĕп хули. 5. Раççейĕн хăй тĕллĕн вĕреннĕ механик-изобретателĕ Иван .... 6. Темиçе сасă килĕшӳллĕн янăрани. 8. Хӳтĕлевĕн пăшалпа пеме хăварнă шăтăкĕ. 9. Тĕрлĕ йышши тупă. 11. Тăхтаманăн кĕске пушши. 12. Киев хулин çĕршывĕ. 17. Тăван çĕршыва парăннă çын. 18. Амăшĕпе ачана çыхăнтаракан пырша. 19. Раççей гражданинĕн документчĕ. 23. Мультфильмри крокодил. 24. Чечек.


**« ХЫПАР »**

Издательство çурчĕ” автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН “ХЫПАР” ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ” ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор-тĕп редактор М.М.АРЛАНОВ

Чăваш ХĔРАРĂМĔ

Çырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – Т.Н.НАУМОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи апрель уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

**РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ:** 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

**ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ:** 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

**Факс:** /8352/ 28-83-70, 56-20-07

**Электрон почти:** hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем “Реклама çинчен” Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн “Аталану çулĕпе”, “Ят-сум”, “Ĕç тата çын”, «Самана таппи» рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Номере 08.04.2016 алă пуснă. Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АО типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13.
64-24-01 – издательство директорĕ.
Тираж 8116. Заказ 1272.